чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче “Коммунизм ялавĕ” /халĕ “Хыпар”/ хаçата “ХИСЕП ПАЛЛИ” орденпа наградăланă

ШĂМАТ КУН
2014, авăн /сентябрь/
20

183-184 /26589-26590/ № №   Хакĕ ирĕклĕ   WWW.hypar.ru




Геннадий ВЕРБЛЮДОВ архивĕнчи сăн ÿкерчĕк

# Андриян Николаевпа спорт çăлтăрĕсем чăваш халăхне тĕнче шайне çĕклерĕç

***Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин вут-çулăмĕ витĕр тухнă, Чул хулари лингвистика институтне пĕтернĕ хыççăн Елчĕк районĕнчи Лаш Таяпари вăтам шкулта 30 çул ытла ачасене нимĕç чĕлхи вĕрентнĕ атте П.В.Сидоров çур ĕмĕре яхăн каялла районти хăш-пĕр пухура е ытти мероприятире çапларах каланине ас тăватăп: «Эпир çамрăк чухне чăвашсем çинчен кÿршĕ çĕр-шывсенче те пĕлсех кайман. Атăл тăрăхĕнче пин çул каяллах тĕпленнĕ пирĕн йăхташсем пирки тĕнчери чылай çĕр-шывра Ардалион Игнатьев 1954 çулта кĕске дистанцисене чупассипе Европа чемпионĕ ятне çĕнсе илсен тата тепĕр икĕ çултан Австралире иртнĕ XVI Олимп вăййисенче виççĕмĕш вырăн йышăнсан кăна пĕлме пуçларĕç».***

Елчĕк районĕнчен тухнă, пăлан пек çăмăллăн та илемлĕ чупакан спринтер хыççăн 1962 çулхи çурла уйăхĕнче тĕнче уçлăхĕнче виçĕ талăк вĕçнĕ Шуршăл кăйкăрĕ Андриян Николаев чăваш халăхĕн чапне тата çÿллĕрех шая çĕклерĕ. Космонавтика енĕпе тĕнче рекордне çĕнетнĕ пирĕн мухтавлă ентеш часах СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ пулса тăчĕ. Тепĕр ултă çултан вара çак ята бокс енĕпе XIX Олимп вăййисен чемпионĕ Валериан Соколов тивĕçрĕ. 1970 çулсенче тинех республикăра Европа чемпионачĕсене хутшăнакан, тĕнче шайне çĕкленнĕ çăмăл атлетсем, велосипедистсем, кĕрешекенсем, боксерсем, парашютистсем тухма пуçларĕç. Тăван республикăра хатĕрленĕ тĕнче спорт мастерĕсен шучĕ Мускаври XXII Олимп вăййисем /1980 çул/ пуçланиччен çирĕме çывхарчĕ.

40-50 çул каялла республикăра çуллахи спорт енĕсем кăна мар, йĕлтĕр спорчĕ, конькипе чупасси тата хоккей та лайăх аталанма пуçларĕ. Иртнĕ ĕмĕр варриччен Чăваш Енре СССР спорт мастерĕн нормативне пурнăçланă икĕ йĕлтĕрçĕ кăна пулнă: Шупашкарти коопераци техникумĕн преподавателĕ Мария Гущина /1912-1983/ тата Чăваш патшалăх ял хуçалăх институчĕ хыççăн Вăрнар поселокĕнче ĕçлесе пурăннă Геннадий Иванов /1910-1983/. 1970-мĕш çулсен варриччен вара йĕлтĕрпе чупассипе СССР спорт мастерĕн ятне республикăра 28 çын тивĕçнĕ. Вăл вăхăтра Чăваш Енре йĕлтĕрçĕсемпе çăмăл атлетсем чи пултаруллисем шутланнă.

Хĕрĕх çул каялла чи вăйлă та хастар йĕлтĕрçĕсенчен ытларахăшĕ Канашра пурăннă. Иккĕшне çеç аса илер: Владимир Воронков тата Дина Григорьева /Скворцова/. Тăван республикăра кăна мар, Пĕтĕм Союзри радиопа телевидени Владимирпа Дина тата РСФСР тава тивĕçлĕ тренерĕн хисеплĕ ятне 1970 çулта тивĕçнĕ Канашри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн директорĕ В.Я.Григорьев çинчен темиçе хут кăтартнă, чылай хаçат-журнал пысăк очерк-статья пичетленĕ. Мухтавлă çак йĕлтĕрçĕсен ячĕсене Швеци, Финлянди, Канада, Франци, Япони тата ытти çĕр-шыв çыннисем паян кунччченех пĕлеççĕ.

Канаш хулин хисеплĕ гражданинĕсен Дина Федоровнăпа Владимир Яковлевич Григорьевсен çемйине республикăра спорт çемйи тесе хисеплеççĕ. Владимир Григорьев 1950-мĕш çулсенчех таврари чи вăйлă йĕлтĕрçĕсенчен пĕри шутланнă, çур ĕмĕр каялла биатлон енĕпе Чăваш АССР чемпионĕ ятне çĕнсе илнĕ. Ленинградри физкультура институтне пĕтернĕ тата Совет çарĕнче хĕсметре пулнă хыççăн 60 çул каялла çамрăк лейтенант тăван хулана таврăннă. Малтанхи вăхăтра Владимир Яковлевич – ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренерĕ, 1964 çултанпа вара çĕнĕ ĕмĕр пуçланиччченех çак ДЮСШ директорĕнче вăй хунă.

● ➡ 5 стр.

«Хыпар» Издательство çурчĕн мĕн пур кăларăмне Раççей почтин кашни уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ:

«Хыпар» – 732 тенкĕ те 66 пус.
«Хыпар» – шăмат кун» – 304 тенкĕ те 08 пус.

# Бизнеса лăпкăлăх кирлĕ

***Пĕтĕм тĕнчери "Сочи-2014" инвестици форумĕнче ĕнер Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей Перекет банкĕ "Бюджет шайлашулăхĕ е ÿсĕме хăвăртлатасси: суйлама вăхăт-и?" темăпа ирттернĕ ĕçлĕ апатланăва хутшăннă.***


ЧР ПА пресс-службин сăн ÿкерчĕкĕ

Макроэкономика тăнăçлăхне çирĕплетмелли мерăсене сÿтсе явма РФ вице-премьерĕсем Ольга Голодец тата Аркадий Дворкович, финанс, экономика аталанăвĕн министрĕсем Антон Силуанов, Алексей Улюкаев, ыттисем хутшăннă. Калаçăва Перекет банкĕн правленийĕн председателĕ Герман Греф ертсе пынă.

Тĕл пулура палăртнă тăрăх – шайлашуллă бюджет экономика ÿсĕмĕн никĕсĕ пулса тăрать. Çавна май налук тиевĕн ÿсĕмĕнчен сыхланмалла, пенсисен пухăнса пыракан висĕн тăнăçлăхне ÿстермелле. РФ субъекчĕсен экономика ÿсĕмне тĕревлемелли мерăсене тишкернĕ май калаçăва хутшăннисем регионсен инвестици илĕртÿлĕхне тĕпе хумаллине палăртнă.

Журналистсен республикăн экономика ÿсĕмне, инвестици илĕртÿлĕхне тивĕçтермелли çулсемпе çыхăннă ыйтăвĕсене хуравланă май Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев бюджет шайлашулăхĕ ĕçлĕ климата лайăхлатассине витĕм кÿни çинчен каланă. Çавăнпа республика бюджетĕнче укçа-тенке программăсем валли тĕллевлĕн уйăрмалли меслете тĕпе хунă. Çавăн пекех экономика кăтартăвĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе обществăпа политика лару-тăрăвĕн тăнăçлăхĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

"Влаççен хăйсем шантарнине пурнăçламалла. Çăмăл мар, анчах регионăн инвестици илĕртÿлĕхĕн шайĕ çакăнтан килет. Экономикăри лару-тăру йĕркеллĕ тĕк – бизнес хăйĕн вырăнне тупатех. Унăн патшалăх 3, 5 тата 10 çуллăха мĕнле вăйă правилисем палăртнине пĕлмелле – çакă чи кирли. Çав правилăсем улшăнсах тăни арпашу çуратĕ, коммерци тытăмĕсем çакна ăнланмĕç. Çавăнпах эпир – тăнăçлăхшăн, хамăрăн бизнесменсем хăйсен тĕллевĕсене ĕçпе тÿрре кăларччăр тесе ырă условисем йĕркелеме тăрăшăпăр", – пĕтĕмлетнĕ республика Пуçлăхĕ.

■ К.ВОЛКОВ

# Импорта хамăрăннипе улăштармалла

***Кĕçнерни кун Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Мускаврa РФ Патшалăх Канашĕн ларăвне хутшăннă. Унта Раççей бизнесне, унăн тулашри рыноксенчи лару-тăрăвне тÿрремĕнех витĕм кÿрекен ыйтусене пăхса тухнă.***

Ларăва уçнă май Владимир Путин Президент юлашки 10 çулта çĕр-шыв экономикинче пысăк улшăнусем пулса иртнине, предпринимательлĕх климачĕ лайăхланнине палăртнă. 16 çул калаçусем ирттернĕ хыççăн Раççей ВТОна кĕнĕ. Анчах Анăç Раççей тĕлĕшпе йышăннă санкцисем ирĕклĕ конкуренци принципĕсене пăсаççĕ, çав çĕр-шывсем ВТОн никĕс шайĕнчи принципĕсене пăрахăçланине çирĕплетеççĕ. Санкцисене хирĕç мерăсене кама та пулин явап тыттарма мар, хамăр çĕр-шыври тавар туса кăларакансене киревсĕр конкуренциren хÿтĕлеме йышăннă.

Çĕр-шыв ертÿçи федераци тата регионсен влаç органĕсене экономикăн чăн секторне аталантарма сĕннĕ. Çапла туума кредитсемпе усă курмалли майсене анлăлатмалла, инфратытăма аталантармалла, производство секторĕ валли ăста специалистсене хатĕрлемелле.

Экономика аталанăвĕн министерствин ертÿçи Алексей Улюкаев вăрахлăх кредит ресурсĕсемсĕр производство ÿсĕмне тивĕçтерме май çуккине палăртнă. Белгород облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕн Евгений Савченкăн шухăшĕпе – Раççейĕн стратеги шайĕнчи тĕп ĕçтешĕ пулма ăнталакан Китайпа тытакан хутшăнусене çĕнĕ шая çĕклемелле. Воронеж облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕ Алексей Гордеев Раççей Ял хуçалăх министерстви юлашки çулсенче кивĕ фермăсене реконструкцилемелли, çĕннисене тумалли проектсене пулăшма пăрахнине аса илтернĕ. Çавна май сĕт суса илес енĕпе ĕçлекен хуçалăхсен укçа çитеймест. Воронеж облаçĕнче, сăмахран, федераци бюджечĕн инвестици кредичĕсен проценчĕсене саплаштармалли парăмĕ 140 млн тенке çитнĕ.

Чăваш Енре Раççей ВТОна кĕнĕ май шалти рынокри импорт продукцийĕн тÿпи ÿснĕ. Çав вăхăтрах çак ÿсĕм тĕпрен илсен предприятисем чикĕлеш енчен пысăк технологиллĕ оборудовани кÿнипе сăлтавланнă. Унашкаллисен шутĕнче – "Промтрактор-Вакун", "ТУС" АХОсем, "Хĕвел", "Керамика", "ГиПор-М", "Проектэлектротехника", "Юрма" агрохолдинг" ОООсем, "Акконд", "Букет Чувашии", "Чăвашавтодор" АУОсем. Вĕсем çĕнĕ производствăсене, оборудование хута янă май импорт калăпăшĕ чакасса кĕтме пулать.

Экономика ĕç-хĕлĕн тĕсĕсене тишкерни çакна кăтартать: Чăваш Енре конкурентлă ĕç-хĕл шутĕнче – апат-çимĕç хатĕрлесси, хими, металлурги, электрооборудовани, электрон тата оптика оборудованийĕн производствисем, çавăн пекех электроэнерги хатĕрлесси, ăна тата газ, шыв валеçесси. Конкурентлăх енĕпе уксахлаканнисем, патшалăх енчен пулăшмаллисем – пир-авăрпа çĕвĕ, машинăсемпе оборудовани, транспорт хатĕрĕсен производствисем.

Республикăн экспортăн пĕтĕмĕшле калăпăшĕнче "Химпром" АУО тÿпи 2010 çулхипе танлаштарсан пĕлтĕр 16,6-ран 28,6% таран ÿснĕ, "Дюпон-Химпром" АУОн – 2,6-ран 6,7, Чапаев ячĕллĕ ПОн – 1,2-рен 3,5% таран. "Акконд" та экспорт калăпăшне ÿстерсе пырать: 2010 çулта АПШн 4620,5 пин долларĕ чухлĕ пулнă, пĕлтĕр – 5686,1 пин доллар шайĕнче.

**ЧĂВАШ ЕНРЕ РАÇÇЕЙ ВТОна КĔНĔ МАЙ ШАЛТИ РЫНОКРИ ИМПОРТ ПРОДУКЦИЙĔН ТŸПИ ŸСНĔ**

■ К.САВЕЛЬЕВ

## Вăрман отраслĕн ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!

**Сире професси уявĕ ячĕпе саламлатăп!**

Вăрман пуянлăхне сыхласси, хушасси, унпа перекетлĕ усă курасси, çынсен экологи культурине ÿстересси – Чăваш Республикин патшалăх политикин пысăк пĕлтерĕшлĕ çул-йĕрĕ.

«Вăрман пек пуянни çук», – тенĕ пурнăç опычĕпе ăслăланнă пирĕн мăн асаттесем. Чăваш Енре хальхи вăхăта тивĕçтерекен вăрман пушарне сÿнтермелли служба йĕркеленĕрен, унăн пурлăхтехника никĕсне çирĕплетнĕрен тата вут-çулăмран сыхланмалли тапхăра вăхăтра хатĕрленнĕрен паян чăтлăх-вĕтлĕхĕн пушар хăрушсăрлăхне туллин тивĕçтереççĕ. 2010 çулхи пушар ешĕллĕхе пысăк тăкак кăтартнă хыççăн ăна саплаштарассишĕн нумай ĕç тунă: 5561 гектар /мĕн пур лаптăкăн 83,5%/ çинчи çунчăка пĕр çĕре пухнă, вут-çулăм иртнĕ 2268 гектар çинче хунав лартнă /пушар сиенленĕ вырăнăн 34%/. Ĕçе малалла тăсаççĕ.

Вăрмана паха йĕркелеме республикăн 2013 çулхи бюджетĕнче укçа пăхса хăварни вăрман фончĕн тухăçлăхне ÿстерме тата унпа перекетлĕ усă курма май парĕ. Пĕлтĕр виçĕ вăрманлăхри 89,6 пин гектар симĕслĕхе йĕркеленĕ. Кăçал çак ĕçе тата виçĕ вăрманлăхра, икĕ çулта вăрман фончĕн мĕн пур лаптăкĕн çурринчен ытларах пайĕнче пурнăçлаççĕ. Халăх пуянлăхне кирлĕ пек шута илме, унпа усă курнине тĕплĕн тĕрĕслеме май тăваççĕ.

Çут çанталăк еткерлĕхне упрассишĕн вăрман хуçалăхĕн специалисчĕсем çеç мар, общество организацийĕсемпе ахаль çынсем те тăрăшнине ырăпа палăртас килет. Чун-чĕре туртнипе йывăç-тĕмлартакансем, вăрмана каяшран тасатакансем çуллен йышланаççĕ.

Чăтлăх-вĕтлĕхе упраса хăварассишĕн, çут çанталăк пуянлăхне хушассишĕн тăвакан капашлă ĕçе малалла тăсмалла. Хăйсен профессине парăннă çынсем çеç ăна пурнăçа кĕртме пултараççĕ.

Ывăнмасăр тунă пархатарлă ĕçĕршĕн тав сăмахĕсене йышăнсамăр! Сирĕнтен кашнинех телей, ăнăçу тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

## Çĕнĕ Шупашкарăн хисеплĕ çыннисем!

**Сире Хула кунĕ ячĕпе пĕтĕм чунтан саламлатăп!**

Çĕнĕ Шупашкар – Чăваш Енри чи çамрăк тата пысăк малашлăхлă хула, промышленноç, культура тата спорт центрĕ. Кунта пултаруллă, ĕçчен, хăйсен хулине юратакан, ăна аталантарма тăрăшакан çынсем пурăнаççĕ.

Çĕнĕ Шупашкар малтисен шутĕнче федерацин моногхуласене пулăшакан программине хутшăнчĕ. Çак программăпа килĕшÿллĕн хулана аталантарма 2,6 млрд тенкĕ уйăрнă. Çĕнĕ Шупашкар ÿссе, сарăлса пырать. Кунта çулсерен çĕнĕ çуртсем хута каяççĕ, нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсаççĕ. Инженерипе коммуналлă инфратытăм объекчĕсене – шыв, канализаци, электричество, газ, ăшă, çыхăну сечĕсене – тăваççĕ. Транспорт инфратытăмĕ лайăхланать: урамсенчи, картишсенчи çулсене юсаççĕ, çĕнĕ магистральсем хываççĕ.

Республика Правительстви халăха шантарнине пурнăça кĕртсе пырать. Çĕнĕ Шупашкарта пĕчĕккисем садике кайма черет кĕтмеççĕ, шкулсене çĕнĕ оборудованисем вырнаçтараççĕ, нумай ачаллă тата сахал тупăшлă çемьесене пурăнмалли çурт-йĕр условисене лайăхлатма пулăшаççĕ.

Кунта физкультурăпа спорта аталантарассине те тĕпе хураççĕ. Çĕнĕ Шупашкарта Пăр кермене, çăмăл атлетика манежĕ, бассейн, футбол уйĕ тата ытти объект тухăçлă ĕçлет. Тĕрлĕ ÿсĕмри тата тĕрлĕ профессиллĕ çыннисем валли сывă пурнăç йĕркине тытса пыма, спортпа туслашма условисем çителĕклĕ.

Иккĕленместĕп: Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакансем малашне те хулана илемлетме, хăтлăлатма тăрăшĕç. Пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 126-мĕш Указĕпе килĕшÿллĕн ĕçри çитĕнÿсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин вăрманпа усă курас тата çĕнетсе пырас енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхне **Геннадий Николаевич МУСАБИРОВА** тата Шупашкар хулинчи «Монолит строительстви» тулли мар яваплă обществăн кадрсен пайĕн пуçлăхне **Наталия Игоревна РОДИОНОВĂНА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă.

Çак Указпах культурăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин «Шупашкарти Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищи /техникумĕ/» профессии енĕпе вĕтам пĕлÿ паракан бюджет вĕренÿ учрежденийĕн преподавательне **Любовь Викторовна КРУПНОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

педагогика тата воспитани парас енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Раççей Федерацийĕн Тĕп Союзĕн «Раççейри кооператив университечĕ» аслă пĕлÿ паракан автономлă коммерцисĕр вĕренÿ организацийĕн Шупашкарти кооперации институчĕн /филиалĕн/ кафедра доцентне **Татьяна Михайловна ГРИГОРОВĂНА,** Шупашкарти муниципалитетăн «2-мĕш лицей» пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан бюджет учрежденийĕн директорне **Татьяна Васильевна ПЕТРОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ВĔРЕНТĔВĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

промышленноçри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн «Комплекслă тивĕçтерÿ» акционерсен хупă обществин сортлă прокат пайĕн ертсе пыракан специалистне **Светлана Григорьевна ЗИНЬКОВĂНА,** Çĕмĕрле хулинчи «Автомобиль фургонĕсен комбиначĕ» акционерсен усă обществин ертсе пыракан инженер технологне **Владимир Николаевич КОЧЕНОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

ял хуçалăхĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хулинчи «Агротехкомплект» тулли мар яваплă обществăн директорне **Валерий Петрович ГАВРИЛОВА,** Çĕрпÿ районĕнчи «Чувашский» агрохими службин патшалăх центрĕн федераци патшалăх бюджет учрежденийĕн директорне **Александр Петрович КОРШУНОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ЯЛ ХУÇАЛĂХĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

вăрман хуçалăхĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин «Сĕнтĕрвăрри вăрманлăхĕ» хысна учрежденийĕн вăрман маçтăрне /вăрмана сыхлас енĕпе ĕçлекен участокри патшалăх инспекторне/ **Геннадий Иванович ГРИШИНА,** Чăваш Республикин «Улатăр вăрманлăхĕ» хысна учрежденийĕн директорĕн çумне **Геннадий Валентинович СУЛЬДИНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ВĂРМАНÇИ»** хисеплĕ ят панă.

# Влаç партийĕ мĕншĕн çĕнтерчĕ?

## АВĂН УЙĂХĔН 14–15-МĔШĔСЕНЧЕ МУСКАВРА ПĔРЛЕХИ СУЙЛАВ КУННЕ ХАЛАЛЛАНĂ "РАÇÇЕЙ РЕГИОНĔСЕМ" МЕДИАФОРУМ ИРТРĔ

Халăхсен хушшинчи суту-илӳ центрĕнче ăна вун-вун политолог-социолог пĕтĕмлетрĕ. "Авăнăн 14-мĕшĕнчи пĕтĕм Раççейри сасăлав маларахринчен çĕршывра кăçал политика лару-тăрăвĕ улшăннипе палăрса юлчĕ, – терĕ обществăри шухăш-кăмăла тĕпчекен центр директорĕ В.Федоров. – Сăлтавĕ акă мĕнре. Кăçалхи нарăс-пуш уйăхĕсенчен пуçласах Раççей Правительстви Крымри, Севастопольти, Украинăн кăнтăр-хĕвел тухăç регионĕсенчи вырăсла калаçакан çынсен правине хӳтĕлет. Раççей вĕсене пулăшни Украина Правительствине çеç мар, АПШпа Европăри хăшпĕр патшалăха килĕшмерĕ, икĕ енлĕ хирĕç тăру амаланчĕ. Вăл суйлавçăсене сехĕрлентерчĕ. Çынсем Крыма Раççейпе пĕрлештернине, Украинăра вăрçă пынине, çĕр-шыв тĕлĕшпе йышăннă экономика санкцине чун-чĕре витĕр кăларчĕç. Вĕсене кӳршĕ патшалăхра снарядсем ӳксе çурăлни, Донбасра çĕр-çĕр çын вилни, Европа пире хирĕçле каварлашни тарăн шухăшлаттарчĕ. Электорат ик-виç çул каялла çеç пин-пин çын çĕкленĕ социаллă ыйтусене ним пулман пек манса кайрĕ. Украина националисчĕсене, вĕсене укçа парса пулăшакансене, экономика санкцине пурнăçа кĕртсе Раççее ура хума тăрăшакан патшалăхсене сивлерĕ. Пĕр шухăш-кăмăлпа – Крымпа Севастополе Раççейпе пĕрлештерес, Украинăри вырăссене пулăшас тĕллевпе – пурăнчĕ. АПШна, Европăри темиçе патшалăха тăшман вырăнне лартрĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан кăçал мĕн пур шайри влаçа хирĕçлес, критиклес туйăм тамалчĕ. Çынсем Владимир Путинăн Крымпа Севастополе Раççейпе пĕрлештерес тĕллевне, вăл пурнăçа кĕнине, Донбасри вырăссене хӳтĕлес тĕлĕшпе çĕр-шыв тăвакан ĕçсене ырларĕç. Президент идейи халăха пĕрлештерчĕ. Çавăнпа ытларахăшĕ вăл йĕркеленĕ, халĕ те çул кăтартакан "Пĕрлĕхлĕ Раççей" парти кандидачĕсемшĕн сасăларĕ".

Политика кĕрешĕвĕн технологийĕн центрĕн директорĕ И.Бунин хайĕн сăмахне РФ умĕнче нумай шухăш-кăмăллă общество тăвас, политика партийĕсемпе пĕрлĕхсен кĕрешĕвне йĕркелес тĕллев тăнине аса илтернинчен пуçларĕ. "Суйлав ăна нумай енĕпе тивĕçтермерĕ, – палăртрĕ вăл. – Кандидатсемпе партисен хушшинче çивĕч кĕрешӳ пулмарĕ. Сăмахран, Николай Меркушкин Самар облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕ пулассишĕн суйлавçăсен 90 процентĕн сассине пухнă. Тĕлĕнмелле кăтарту тĕрлĕ шухăшпа палăрнă Самар облаçĕн электоратне мар, Мордвари суйлавçăсен иртнĕ тапхăрти Меркушкин майлă пĕр шухăшлăхне аса илтерчĕ. Суйлавçăсен 86 процентне хăй майлă çавăрнă Валерий Шанцев /Чул хула облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕ/, 80 процент тата ытларах сасă пухнă ытти пуçлăх регионĕнче кĕрешӳ пулман. Крымпа Севастополе Раççее тавăрнине ырласа йышăннисем "Пĕрлĕхлĕ Раççейпе" унăн кандидачĕсемшĕн сасăланă. Мускаври суйлав çеç ытти нумай регионтинчен хайне евĕрлĕрех. Кунта партисен пĕлтерĕшĕ пысăк мар. Суйлавра çĕнтересси кандидатсем электоратпа епле ĕçлениинчен, вĕсене çынсем хисепленинчен е сивленинчен нумай килчĕ. Чылайăшĕ саккунсем йышăнакан органта темиçе тапхăр ĕçленĕрен, хайсене суйлавçăсем лайăх пĕлнĕрен мандата тивĕçрĕ. "Пĕрлĕхлĕ Раççей" депутачĕсен ушкăнĕ чи пысăкки, иккĕмĕш вырăнта – КПРФ. Кĕскен: суйлав хальхи влаç тĕллевĕсене, шухăш-кăмăлне майлă, референдум евĕрлĕ иртрĕ".

Обществăри шухăш-кăмăла тĕпчекен фонд президенчĕ А.Ослон та "Пĕрлĕхлĕ Раççейрен" чи нумай кандидат суйланнине Крымпа Севастополе Раççее кĕртнипе, Правительство Донбасри вырăссене хӳтĕленипе, Украина ыйтăвĕпе çĕр-шывра Европăна хирĕçле шухăш-кăмăл йĕркеленнипе ăнлантарчĕ. "Суйлавçăсем федераци влаçне иртнĕ çулхинчен урăхларах йышăнчĕç, – терĕ вăл. – Унăн Крым, Севастополь, Украина тĕлĕшпе тытса пынă çул-йĕрне,




Европа Раççей тĕлĕшпе экономика санкцийĕ пурнăçа кĕртме йышăннине пĕлтернĕ хыççăн Правительство хĕвел анăçĕнчи патшалăхсенчен темиçе тĕрлĕ апат-çимĕç кӳме чарнине ырларĕç. Ку влаçпа халăх пĕрешкел шухăшланине пĕлтерчĕ. Президентпа премьер-министр ĕçне пысăка хурса хак пачĕç. Çавăнпа "Пĕрлĕхлĕ Раççей" пур çĕрте те чи нумай тата ытти партирен чылай ытларах сасă пухрĕ ".

"Вăл çĕнтересси суйлавчĕн темиçе уйăх маларах уçăмланчĕ, – терĕ РФ Общество палатин членĕ Д.Бадовский. – Иртнĕ уйăхсенче В.Путин рейтингĕ – 70-72, В.Жириновскин – 6, Г.Зюгановăн – 4, С.Мироновăн 1 процент шайĕнче тăчĕ.

**ÇЫНСЕМ ВЛАДИМИР ПУТИНĂН КРЫМПА СЕВАСТОПОЛЕ РАÇÇЕЙПЕ ПĔРЛЕШТЕРЕС ТĔЛЛЕВНЕ, ВĂЛ ПУРНĂÇА КĔНИНЕ, ДОНБАСРИ ВЫРĂССЕНЕ ХӲТĔЛЕС ТĔЛĔШПЕ ÇĔР-ШЫВ ТĂВАКАН ĔÇСЕНЕ ЫРЛАРĔÇ**

Ыран Президент суйлавĕ иртсен çав рейтинг Путин çĕнтерессе пĕлтернĕ. "Пĕрлĕхлĕ Раççей" мĕн пур шайра пĕрремĕш вырăна йышăннине Президент Крым, Донбасс, Европа санкцийĕ тĕлĕшпе тĕрĕс йышăну тунине çынсем пысăка хурса хакланипе ăнлантаратăп, – терĕ "Минченко консалт" коммуникаци холдингĕн президенчĕ Е.Минченко. – Çапах та партисен хушшинче кĕрешӳ пачах пулман тенипе килĕшместĕп. Вăл тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕрен пынă. Çакна КПРФ Мускавра суйлавçăсен 20 процентне хайне майлă çавăрни те аван çирĕплетет".

Форумра Раççей Правительствин тата "Пĕрлĕхлĕ Раççей" парти Председателĕ Дмитрий Медведев сăмах каларĕ. "Общество хайне лайăхлатассишĕн 20 çул ытла вăй хурать, – терĕ. – Пирĕн умра нумай партилĕхе пурнăçа кĕртес, суйлав нормисене уçăмлатас тĕллев тăратчĕ. Ăна пурнăçа кĕртрĕмĕр. Улшăнусем – куç умĕнче. Чăн та, хăшĕ-пĕри çав ĕç пынине манăçа кăларнă. Анчах асăннă ыйтусене татса парассишĕн нумай тăрăшма тиврĕ. Суйлавçăсем манран кĕпĕрнаттăрсене суйлама ыйтрĕç. Вĕсене каллех суйлама пуçларăмăр".

"Пĕрлĕхлĕ Раççее" эпĕ икĕ çул ытла ертсе пыратăп, – сăмахне тăсрĕ премьер-министр. – Ăна Раççей Президенчĕ Владимир Путин никĕсленĕ. Вăл 2 миллион çынна пĕрлештерет. Вĕсем влаçăн кашни тытăмĕнче вăй хураççĕ, мĕн пур шайри суйлава хастар хутшăнаççĕ. Иртнĕ вырсарни кунхи суйлавра та эпир чи нумай сасă пухрăмăр. Çавăнпа кăмăл çĕкленнине пытармастăп".

Д.Медведев обществăри политика тытăмне лайăхлатас ыйту çинче те чарăнса тăчĕ. "Обществăра политикăна урăхларах йышăнма пуçларĕç, – терĕ вăл. – Пуç тавра çавăрса шухăшлакан хушăнчĕ. Хăйсен прависене лайăх пĕлеççĕ, ыйтăвĕсене уçăмлă хурав партарассишĕн тилмĕреççĕ. Влаç ырă ĕç тăвасса кĕтеççĕ. Суйлав кампанийĕ пынă чух кандитатсен сăн ӳкерчĕкĕсем çине йăл кулса çеç пăхса иртеççĕ. Сасăлав еплерех пынине, комисси бюллетеньсене шутланине сăнама хапăл тусах килĕшеççĕ. Сасăлав иртнĕ кун суйлав участокĕсен ĕçне çутатакан интернет-трансляцие сехечĕ-сехечĕпе пăхса ларакан, çирĕп шухăш-кăмăллă çынсене пĕлетĕп. Вĕсемпе "Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн" йышăну пӳлĕмĕнче те тĕл пулатăп. Мана политика тытăмне мĕнле улăштармаллине, пурнăçа епле лайăхлатмаллине ăнлантараççĕ".

"Вĕсемшĕн пурте икĕ айкки те тăвайкки мар, – палăртрĕ Дмитрий Анатольевич. – Чăн та, ку – чи кирли. Çынсем обществăна демократи кирлине чунран туяççĕ. Çавнашкаллисем хушăнсан политика тытăмĕн пахалăхĕ лайăхланатех. Крымпа Севастопольте кăçалах суйлав ирттерсе тĕрĕс турăмăр. Ăна тепĕр çулталăкран йĕркелеме йышăнса тĕрĕс мар тăваттăмăр. Саккунсем йышăнакан органсем иккĕшне те халех кирлĕ".

Д.Медведев КПРФ, ЛДПР, "Тĕрĕслĕхшĕн тăракан Раççей" парти ертӳçисем Г.Зюганов, В.Жириновский, С.Миронов, РФ Патшалăх Думин ытти депутачĕ Пĕрлехи сасăлав кунне авăн уйăхĕн иккĕмĕш вырсарни кунĕнчен пуш уйăхне куçарма сĕнни пирки çапла каларĕ: "Вĕсем хальхи сасăлав кунне чăрмав вырăнне хураççĕ. Эпĕ ун пек шухăшламастăп".

Муниципалитетсенче тĕрлĕ парти хушшинче кĕрешӳ начар пыни пирки: "Пĕрлĕхлĕ Раççей" вырăнти хăй тытăмлăх Пухăвĕн депутатне, пуçлăхне суйлама кандидатура çителĕклех тăратнă. Ытти партин те çав шайра ĕçлемелле пулнă", – терĕ. Çулталăк вĕçлениччен депутатсен бюджет çирĕплетмеллине, суйлавçăсен умĕнче шантарнă ĕçсене тумаллине аса илтерчĕ. Регионсенчен пуçтарăннă темиçе çĕр журналиста çапла каларĕ: "Информацин йышлă хатĕрĕсем халăха тĕрлĕ шухăша паллаштараççĕ, регионсенче пурăнакансене вырăнти ыйтусене ăнланма пулăшаççĕ. Пресса – хайĕн вулаканĕпе юнашарах. Субъектсенче унăн яваплăхĕ тĕп хуларипе танлаштарсан пысăкрах. Статья айне псевдоним лартнипе яваплăхран пăрăнаймăн".

Правительство Председателĕ информацин йышлă хатĕрĕсен /ИЙХ/ никама пăхăнманлăхĕпе çыхăннă ыйтăва та хускатрĕ. Вăл е ку лару-тăрăва пур енлĕн те тĕрĕс çутатма регионсенче Мускавринчен йывăртараххине, федераци шайĕнчипе танлаштарсан субъектсенче ИЙХ никама пăхăнманлăхĕн ыйтăвĕ çивĕчреххине пытармарĕ. "Çынсене чăнлăхпа килĕшсе тăман информацие ултлама парас мар тесен федерацин тивĕçлĕ саккунне лайăхлатмалла, – терĕ. – Халăха патшалăх шайĕнчи ĕçсем çеç мар, вырăнтисем те кăсăклантараççĕ. "Пĕрлĕхлĕ Раççей" ертӳçи пулнă май сире çынсемпе тачă хутшăнма чĕнсе калатăп. Влаç халăхпа ИЙХ урлă калаçать. Сирĕн ĕç пахалăхĕ информаци хатĕрĕсем пулăшнипе влаç сăмахне халăх патне, çынсен сăмахне влаç патне мĕнлерех çитерниничен нумай килет".

Политика партийĕсен ертӳçисем Геннадий Зюганов, Владимир Жириновский, Сергей Миронов "Пĕрлĕхлĕ Раççейрен" Пĕрлехи сасăлав кунне авăн уйăхĕнчен пуш уйăхне куçарма тархасласах ыйтрĕç. Электорат çулла пахчана, амăшĕсем шкула ярас умĕн ачасене вăхăт нумай уйăрнăран суйлав кампанине тухăçлă йĕркелеме май çук, çавăнпа суйлава çын сахалрах хутшăнать терĕç. "Халăхăн пысăк пайĕ сасăлав правипе усă курайманшăн влаç партийĕ пĕрре те кулянмасть, – терĕ Жириновский. – Çынсем суйлава сахалрах кайни унăшăн усă çеç. Çавăнпа пирĕн сĕнĕве йышăнмасть".

"Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн" генеральнăй канашĕн секретарĕ Сергей Неверов ыйтăва хуравласа çапла каларĕ: "2000 çулсенче суйлав пуш уйăхĕнче иртнĕ. Вĕсене суйлавçăсен – 40-45, авăн уйăхĕн иккĕмĕш вырсарни кунĕнче 46,2 проценчĕ хутшăннă. Пĕрлехи сасăлав кунне унччениччен сахалрах хутшăннă тени чăнлăхпа килĕшсе тăмасть".

"Çулла суйлав кампанийĕ йывăррăн иртрĕ, – пĕлтерчĕ Зюганов. – Раççейри тĕп телеканалсем çынсем ĕçрен таврăнсан партисен элчисене эфира кăларса вĕсен платформине паллаштарма май туса памарĕç. "Раççей-24" телеканал суйлавçăсем производствăра чухне кăна вăхăт уйăрчĕ. КПРФшăн сахалрах сасăлачăр тесе "КПСС", "Раççей коммунисчĕсем", "КПРФ" ятлă партисем йĕркелерĕç. Вĕсен ĕçĕнче коммунистсен тĕллевĕпе çыхăнни ним те çук. Нумайăшĕ эпĕ ертсе пыракан Раççей Федерацийĕн коммунистсен партийĕ тесе вĕсен ячĕсен тĕлне çекĕл лартса йăнăшнă".

Жириновский суйлавçăсен 50 процентĕнчен ытла сассине пухса кĕпĕрнаттăра суйланни политикăн тӳрĕ кĕрешĕвĕпе çыхăнса тăмасть терĕ, 5 регионта /вăл шутра Мускавра, Ленинградпа Калининград облаçĕсенче, Крымра, Севастопольте/ иртнĕ суйлав пĕтĕмлетĕвĕпе килĕшменнине пĕлтерчĕ.

Миронов ЛДПР, КПРФ, "Тĕрĕслĕхшĕн тăракан Раççей" сахалрах сасă пухнине вĕсен ертӳçисем, вĕсенче тăракан çынсем, агитаторĕсем чикĕ леш енчи патшалăхсем Раççее санкцие хăратнă чух Раççей Президенчĕ тавра чăмăртаннипе те, социаллă ыйтусене иртнĕ суйлавсенчи пек çивĕч лартманнипе те, экономика санкцийĕн тапхăрĕнче влаç партине критиклеменнипе те сăлтавларĕ. Неверов суйлавçăсем Владимир Путин тавра çирĕп тăнăран "Пĕрлĕхлĕ Раççей" ытти партие хыçала нумай хăварса мала тухнине çирĕплетрĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ.**

**Шупашкар – Мускав – Шупашкар**

# «Тăнăçлăх – парламентăн ăнăçлă ĕçĕн палли»



**Пирĕн ыйтусене ЧР Патшалăх Канашĕн вице-спикерĕ, Экономика политики, агропромышленноç комплексĕ тата экологи енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ Олег МЕШКОВ хуравлать**

**– Олег Вадимович, ЧР Патшалăх Канашĕ йĕркеленнĕренпе кăçал 20 çул çитрĕ. Паллах, эсир çак икĕ теçетке çулшăн явап тытаймастăр, çапах та хăвăр депутат тивĕçĕсене пурнăçлакан çулсенчи парламентăн хăш утăмĕсене пысăк, пĕлтерĕшлĕ ĕçсем тесе хакланă пулăттăр?**

– Тĕрĕсех, эпир 2012 çулхи суйлавра депутат мандатне илнĕ. Эппин, çак тапхăршăн яваплă. Патшалăх Канашĕн тĕп ĕçĕ – саккунсем кăларасси, пĕлтерĕшли те вĕсемпех çыхăннă. Сăмахран, республика Пуçлăхне суйласси çинчен калакан саккун. Е тата – саккун кăлармалли пуçарусем. Тĕрĕссипе, ку ĕçе кашни суйлаври парламентах пурнăçлать. Эпир темле революци туман, пăтăрмахсем пулман, импичмент, референдум йĕркелемен... Çакă, çирĕп тăнăçлăх, лайăх та.

Ытларах хам ертсе пыракан комитет пирки каласшăн. Алă усса ларман. Экономикăн тĕрлĕ отраслĕнче мĕн пулса иртет – пĕтĕмпех пирĕн комитетра пăхса тухмалли ыйтусем. Ĕçе кӳленнĕ çулах эпир Патшалăх Думине ял хуçалăхне пулăшас тĕллевпе саккун кăлармалли пуçарупа тухрăмăр. Ăна Раççей субъекчĕсем пурте тенĕ пекех ырларĕç. Нумаях пулмасть пирĕн çав пуçарусенчен пĕр пунктне Думăра çĕклерĕç. Сăмах – субсидисем пирки. Ял хуçалăх предприятийĕсем кредит илеççĕ – уншăн коммерци процентĕсене тӳлин тӳлеççĕ. Саплаштармалли вĕсене патшалăхăн тавăрса памалла – темиçе уйăх е çулталăк таранах кĕтме тивет. Пур пĕр бюджет укçи вĕт: хуçалăхсем хăйсен процент виçине кăна тӳлечĕр, банксемпе вара патшалăх кайран хăй татăлтăр – çакăн пек пуçару турăмăр. Дума татса пама тивĕç – чăннипех пысăк ĕç.

ЖКХ ыйтăвĕсемпе те Думăна тухрăмăр. Электроэнерги тарифĕсене коммерци тытăмĕ çине куçарассине чармашкăн сĕнтĕмĕр. Çакна та чылай регион ырларĕ. Кунашкал нумай пуçару пирки калама пулать.

2020 çулччен ял хуçалăхне аталантармалли саккуна икĕ вулавпа йышăнтăмăр. Пысăк та пĕлтерĕшлĕскер. Хамăр бюджетран кăна ăна пурнăçлама 9,5 млрд тенкĕ уйăратпăр. Нумай пек, анчах 5-6 çуллăха пулнине шута илсен – нумаях та мар. Çав вăхăтрах техника, ГСМ, электроэнерги, ытти çуллен хакланса пырать. Темиçе çултан укçан асăннă виçи мĕн туянма çитĕ – тĕптĕрĕс пĕлме хĕн. Çавăнпа пуçару турăмăр: çак укçана инфляцие кура индексацилесе пымалла.

**– Тытăççах каятчĕç теместĕп, çапах унччен парламентсенче хĕрӳ тавлашусем пулатчĕç. Паян аплах тавлашмаççĕ пек. Çакă мĕнпе çыхăннă? «Пĕрлĕхлĕ Раççей» фракци йышĕ пысăк та – унăн депутачĕсем пĕр саслă пулнин витĕмĕ-и?**

– Ку кăна мар. Тавлашуллă самант паян та пайтах, анчах нумай ыйтăва комитетсенче сессиччене татса пама тăрăшатпăр – тĕп тавлашусем шăпах унта. Чăнах та, «ПР» фракцийĕн йышĕ пысăккин витĕмĕ те пур. Анчах оппозици те çук мар – сессиенче калаçусăр пулмасть. Иртнĕ сессире те, авă, çивĕч самантсем пулчĕç. Тепĕр чух кирлĕ-кирлĕ мар ыйтусене те çĕклеççĕ. Çав вăхăтрах «Пĕрлĕхлĕ Раççей» йышĕнчи депутатсем те ыйтусем параççĕ – çакна та асăрхăр. Иртнĕ сессире Çут çанталăк ресурсĕсен министерстви тĕлĕшпе калаçу пулчĕ: вăрман касасси, ытти – министртан ыйтрĕç.

**– Иртнĕ сессире ырланă документсенчен пĕрне хăшĕсем «Черкесов валли» тунă саккун тесех хакларĕç. Районсенче пĕр пуçлăх пулать, Шупашкарта вара – хула тата администраци пуçлăхĕсем. Кун пирки мĕн шухăшлатăр?**

– Районсенче район пуçлăхĕ тата администраци пуçлăхĕ пĕр çын пулать. Хулара депутатсем хăйсен хушшинче хула пуçлăхне суйлаççĕ, вăл комисси урлă кăларса сити-менеджерпа контракт тăвать. Икĕ тытăм пулни пĕр енчен тĕрĕс: хăшĕ лайăхрах – танлаштарма май пур. Хулана илес тĕк – депутатсем администраци пуçлăхĕн ĕçне тĕрĕслесе тăма пултараççĕ. Коррупци никĕсĕ çинче иккĕшĕ пĕтĕçсе ан кайччăр, сити-менеджера ашкăнма ан паччăр. Пĕр çын пулсан – укçа та, управлени те пĕр алăра, вăл хăйĕн влаçĕпе усă курса «ашкăнасси» те часах, çавăнпа чару тытăмĕ кирлĕ. Çапла, пĕри тепринчен аслăрах тесе пуç касăртма пултарать, анчах ăна чарма пулать: контракт паян пур, ыран вара пулмасса та пултарать. Администраци пуçлăхне суйланă чухне вăл «мана халăх суйланă, полномочи вĕçлениччен мĕн тăвас тетĕп – çапла тăватăп» теме пултарать. Унашкаллисем валли уголовлă ĕç пур теççĕ-ха, анчах ку юлашки мера вĕт – ĕç-пуçа мĕншĕн ун патнех çитермелле?

**– Петр Краснов депутат, парламентăн темиçе суйлавĕнче ĕçлекенскер, унччен парламентарисен йышĕнче культура, вĕрентӳ, ытти сфера представителĕсем нумай пулни çинчен каланăччĕ. Хальпăхатăп та – тĕп йыш директорсем, управленецсем…**

– Тĕрĕссипе, çакă мана та килĕшсех каймасть. Патшалăх Канашĕнче тĕрлĕ сий представителĕсем пулмалла: культура çыннисем, врачсем, учительсем... Ку обществăн анлăрах сийĕсен интересĕсене хӳтĕлеме май парĕ.

**– Анчах директорсен, паллă, ресурссем ытларах – учитель вĕсемпе мĕнле тупăшайĕ?**

– Эпĕ апла каласшăн мар. Иртнĕ суйлавра кандидатурăсене парти списокĕсемпе тăратнă чух çав çынсене те кĕртме май пулнă – нумай укçа тăкмасăрах. Партисен малашне çакна шута илмеллех. Калăпăр, «Пĕрлĕхлĕ Раççейре» хайхи сийсенчен пĕр пилĕк депутат пулнă тăк – пирĕн блок нимĕн чухлĕ те хавшакланмастчĕ.

Тĕрĕссипе, халĕ те ертӳçĕсем кăна мар. Эсир асăннă Петр Красновах – культура сферинче чылай çул ĕçленĕскер. Владимир Мидуков – вĕренӳ министрĕ пулнă. Пур вĕсем. Çапах врач, шкул директорĕ...

**– …журналист…**

– ...культура представителĕ пулсан пăсмастчĕ. Вĕсем Патшалăх Канашĕн «тавра курăмне» анлăлатĕччĕç, унăн ĕçне пуянлатса нумай енлĕрех тăвĕччĕç.

...Спортсмен та пур-ха – Ирина Калентьева. Анчах вăл халĕччен пĕр сессине те килсе курман. Ун пеккисем кирлĕ мар. Темле тава тивĕçлĕ пулсан та унашкаллисене парламент çывăхне ямалла мар. Ку пирĕн йăнăш – çакна йышăнмалла.

**– Хăй вăхăтĕнче вăл списока илемлетме килнĕ пулнă-тăр ĕнтĕ.**

– Çук, ун пеккисем илемлетмеççĕ, пачах тепĕр майлă – пăсаççĕ. Ун вырăнне врач килнĕ тĕк – лайăхрах пулатчĕ.

**– Паянхи парламент, тĕпрен илсен, ЧР Пуçлăхĕ майлă пулни куç кĕрет. Хăшĕсем çакăншăн ăна сивлеме те пăхаççĕ – «Игнатьев айне кĕрсе ӳкнĕ» имĕш.**

– Ку – оппозици сăмахĕсем, вĕсемпе килĕшместĕп. Парламентпа ЧР Пуçлăхĕ хирĕçсе пурăнни республикăшăн усăллă-и вара? Сиен кăна. Калăпăр, бюджет саккунĕсене вăхăтра йышăнманни пĕтĕм республика пурнăçне япăх витĕм кӳрĕ – пенсисене, ĕç укçине... Пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлени – вăй.

Çакна та калам: ертӳçĕсем Патшалăх Канашĕн ят-сумне çĕклесе пыма тăрăшаççĕ. Хула шайĕнче депутатсемпе администраци мĕнле ĕçлемелли пирки каларăмçке – кунта та çаплах: эпир, саккунсем кăларакан влаç, палăртнине ĕç тăвакан влаçăн пурнăçа кĕртсе пымалла. Çавăнпа ПК шайне ӳкерме юрамасть, парламентăн Правительство инструменчĕ пулмалла мар. Паян ку енĕпе пĕтĕмпех йĕркеллĕ: ПК – инструмент мар, Правительствăпа алла-аллăн ĕçлекен тытăм.

**– Эсир – республика ертӳçисен аслă теçеткинчи çын. Калăр-ха, Мешков депутат Михаил Игнатьевпа курнăçнă май «ку – йăнăш, апла тумалла мар» теме пултарать-и?**

– Михаил Васильевич – питĕ «демократичнăй» ертӳçĕ. Хăйĕн шухăшне пĕлтерсен те ыттисенне итлеме тăрăшать. Теприсем хирĕçлесен вĕчĕрхенесси те часах. Ăна вара хăвăн шухăшна калама юрать. Итлет кăна мар, илтет те. Кайран тĕрлĕ шухăша тишкерсе хăй йышăну тунă чух вĕсемпе усă курать. Ĕçлĕ, конструктивлă тавлашăва пӳлмест, унпа калаçма пулать. Çакă мана килĕшет.

**– Эсир производствăран килнĕ. Кунта – пачах урăх ĕç. Производствăшăн тунсăхламастăр-и?**

– Производствăра ăнса пырсан ĕç кăтартăвĕ курăмлă. Кунта вара, политикăра, паянхи ĕç кăтартăвĕсем халех мар, темиçе çултан тин палăрма пултараççĕ. Суйлавçăсемпе курнăçатăн, депутатсемпе хутшăнатăн. Çак ĕçе хамăн пурнăçăн тепĕр тапхăрĕ тесе хаклатăп. Маншăн – интереслĕ тапхăр. Çапах тепĕр суйлаврах каймашкăн тивме пултарать, эпир кунта вăхăтлăххине манмалла мар.

**– Темиçе çул каялла Мускавра Владимир Путин Президент ирттернĕ пресс-конференцие хутшăнма тивнĕччĕ. Ăна панă ыйту асра юлнă: «Сире мĕншĕн намăс?» Çав ыйтупа усă курам-ха: сире намăс пулать-и?**

– Тӳрех калам: намăс пуласран хăратăп. Паянччен никама та усал туман, усă кӳме тăрăшнă кăна. Юлташсен, çывăх çынсен, суйлавçăсен умĕнче намăс курма пултарасси, паллах, шухăшлаттарать. Турă сыхлатăр унашкаллинчен. Çавăнпа çынсене итлемелле – аслисене, килтисене...

**– Путин «çынсен чухăнлăхĕшĕн намăс» тесе хуравланăччĕ.**

– Кӳренмелле тени вырăнлăрах пуль. Чăваш Енре пурăнакансем пĕтĕмĕшле илсен ĕçчен, çав вăхăтрах республика хăш-пĕр регионтан япăхрах пурăнни чăннипех кӳренмелле. Республика бюджечĕ пĕчĕкрех пулнăшăн, экономика эпир ĕмĕтленнĕ пек вăйлă аталанайманшăн, инвестицисем çителĕксĕрришĕн, çĕнĕ предприятисем нумай пулайманшăн – кӳренмелле... Укçа кирлĕ, бюджет пысăкрах пулмалла. Çакă, шел те, пиртен кăна килмест. Çапах ĕç-пуçа улăштарма тăрăшатпăр – вăй çитнĕ таран.

■ **Николай КОНОВАЛОВ калаçнă.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

## Блиц

### Çемье

– Ĕç кунĕ вăраха тăсăлать. Çук, мăшăр куншăн мăкăртатмасть – çакăн чухлĕ пурăнса хăнăхнă ĕнтĕ. Нумаях пулмасть кĕмĕл туй турăмăр вĕт. Хыçра çирĕп тыл – мăшăр, çемье – пулсан, ăнланса, тĕрев парса пырсан ĕç те ăнăçлă.

Манăн виçĕ ача. Асли Мускавра аслă пĕлӳ илчĕ, инженер-экономиста вĕренчĕ, консалтинг агентствинче тăрăшать. Вăталăххи – шкулта 10-мĕш, кĕçĕнни 3-мĕш классенче вĕренеççĕ. Вĕсен малашлăх валли, паллах, шухăшĕсем пур. Çук, депутат пулатпăр темеççĕ. Анчах предприниматель пуласси пирки те каламаççĕ. Эпĕ вара Экономика комитетне ертсе пынă май предпринимательсемпе те ĕçленине кура яланах калатăп: пирĕн ачасем предприниматель пулатăп тесе ӳсрĕç тĕк, эппин, экономика аталанăвĕ валли патшалăхра тĕрĕс условисем йĕркеленĕ. Хальлĕхе вара çамрăксем чиновник пулма ăнтăлаççĕ – ун пек общество ăнăçлă аталанасси иккĕленӳллĕ. Предприниматель пулатăп тесе каласси патне çитеймен-ха. Шел, манăн ачасем те апла каламаççĕ.

### Атте-анне

– Телее, аттепе анне чĕрĕ-сывă пурăнаççĕ-ха – Патăрьел районĕнчи Пăлапуç Пашьелте. Нумаях пулмасть ылтăн туй турĕç. Эпир, тăвату ачи, ялта час-часах пулма тăрăшатпăр. Мăнукĕсем вĕсене питĕ юратаççĕ, çулла ялан унта – ватăсене тунсăхлама памаççĕ.

### Пушă вăхăт

– Ертӳçĕсенчен нумайăшĕ – е сунарçă, е пулăç. Манăн унашкал хобби çук. Тĕрĕссипе, пушă вăхăт та питĕ сахал, çавăнпа майсем çукрах. Тен, каярахпа, пенси çулĕсем çывхарсан, тупăнĕ. Çапах сунар мана килĕшмест – сунарçă пулмастăпах. Кирек мĕнле пулсан та чĕр чунсене вĕлерме тивет-çке. Çийĕнчен çав чĕр чунсен çăлăнма шанăç та çук: сунарçăсем çĕрле те лайăх куракан прицелсемпе – тискер чĕр чунпа сунарçă хушшинче пĕр танлăх çук.

### Кĕнекесем

– Чылай вулатăп. Çулталăк пуçламăшĕнче ятарласа список тăватăп та – çав кĕнекесене вуласа тухма тăрăшатăп. Çул çинче машинăра, ытти чухне пушă самант тупăнсан та алла кĕнеке тытма тăрăшатăп. Бизнес çинчен илемлĕ литература мелĕсемпе çырса кăтартнă хайлавсем кăмăла каяççĕ. Халĕ ют çĕр-шыв авторĕн «Жесткий тайм-менеджмент» кĕнеки алăра. Борис Акунин хайлавĕсен ярăмне вуласа пĕтертĕм – «Статский советник» кĕнекерен пуçларăм та. Валентин Пикулĕн «Честь имею» кĕнеки килĕшрĕ – пĕрремĕш тĕнче вăрçи çинчен. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пирки аван пĕлетпĕр, çĕр çул каялла пуçланнă вăрçă çинчен вара пĕлсех каймастпăр. Интересли пайтах – вулама сĕнетĕп.

«Как превратить 5 долларов в 50 миллиардов» кĕнеке те кăсăклă.

**– Укçана мĕнле ӳстермелле вара?**

– */Кулать/.* Каламастăп – вуласа пĕлĕр.

# Андриян Николаевпа спорт çăлтăрĕсем чăваш халăхне тĕнче шайне çĕклерĕç



●Хĕллехи XI Олимп вăййисен тата тĕнче чемпионĕ В.П.Воронков.

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Канашри спорт шкулĕнче вĕреннĕ яшсемпе хĕрсенчен совет саманинче кăна 40 ытла çын СССР спорт мастерĕн нормативне пурнăçланă. В.Я.Григорьевăн пирвайхи вĕренекенĕсем Владимир Вороновпа Дина Григорьева-Скворцова тĕнчипе паллă йĕлтĕрçĕсем пулса тăнă. 1960-мĕш çулсен вĕçĕнче спорт шкулĕнче вĕреннĕ Игорь Казиков хăй вăхăтĕнче ВЛКСМ Тĕп Комитетĕнче, Пĕтĕм Раççейри «Динамо» физкультурăпа спорт обществин пай пуçлăхĕнче тата çĕршыври Олимп комитечĕн ертÿçин пĕрремĕш çумĕнче вăй хунă. Çав çулсенче Игорь Борисович çĕршывăн пĕрлештернĕ командисене хĕллехи XVIII-XIX, çуллахи XXVI-XXVIII Олимп вăййисене хатĕрленме тата вĕсене тăватă çулта пĕрре ирттерекен тĕнчери чи пысăк пĕлтерĕшлĕ ăмăртусенче Раççей чысне тивĕçлипе хÿтĕлеме тăтăшах пулăшнă. РФ физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, педагогика ăслăлăхĕсен докторĕ, «Хисеп палли» тата Туслăх орденĕсен кавалерĕ, пирĕн мухтавлă ентеш И.Б.Казиков 2010 çултанпа – Раççейри Олимп комитечĕн президенчĕн советникĕ.

Игорь Борисовичăн аслă юлташĕ Владимир Воронков алла аттестат илнĕ хыççăн ашшĕ сĕннипе тÿрех вакунсем юсакан заводра слесарьте ĕçлеме пуçланă. Каçхине ĕçрен таврăнсан вăл ачаран хăнăхнă йăлапа тепĕр сехетренех спорт шкулне васканă. Республикăри йĕлтĕрçĕсен чи сумлă тренерĕ Владимир Яковлевич хăйĕнчен вун пилĕк çул кĕçĕнрех аташне /тёзка/ кунта хăй ывăлĕпе пĕр танах юратса кĕтсе илнĕ. Çамрăк рабочин спортри çитĕнĕвĕсем тĕлĕнмелле хăвăрт ÿснĕ. 1963 çулта иртнĕ ЧАССР чемпионатĕнче В.Воронков пурнете тĕлĕнтерсе 15 çухрăмлă дистанцире хăйĕнчен чылай аслăрах спорт мастерĕсене – Карл Максимова, Владимир Бекренева, Виталий Гурянова тата Сĕнтĕрвăрринчи «Урожай» ФСО чемпионне Евгений Носова çĕнтерсе пĕрремĕш вырăн йышăннă. Çитес çул пуçламăшĕнче В.Я.Григорьевăн пултаруллă вĕренекенĕ Раççей чысне Мурманск облаçĕнче Пĕтĕм Союзри «Локомотив» ФСО чемпионатĕнче хÿтĕленĕ. Кунта вун тăхăр çулти Канаш каччи виççĕмĕш пулнă, спорт мастерĕн нормативне пурнăçланă. Çакăн хыççăн Владимир Воронков Канаш тата Чăваш Ен чысне вунă çул хÿтĕленĕ.

Совет Союзĕн чемпионачĕн пĕрремĕш медальне вăл 1967 çулхи нарăс уйăхĕнче тивĕçнĕ. Çĕршывра мала тухассишĕн Ленинград облаçĕнче иртнĕ яваплă ăмăртусенче 400 ытла йĕлтĕрçĕ вăй виçнĕ. СССР Правительстви çумĕнчи Физкультурăпа спортăн патшалăх комитетĕнчен маларах пĕлтернĕ тăрăх – çак чемпионатра тĕрлĕ дистанцире малти виçĕ вырăна йышăнакан спортсмен тепĕр çулталăкран çĕршыв чысне хÿтĕлеме Францири Гренобль хулинче пуçланакан хĕллехи X Олимп вăййисене кайма пултарать.



●Икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ А.Г.Николаев Олимп вăййисен тата тĕнче чемпионĕсемпе, вĕсен тренерĕсемпе пĕрле Испанире иртнĕ Олимпиадăран таврăннă хыççăн /1992 ç./.

1968 çулччен ирттернĕ Олимпиадăсенче тĕрлĕ дистанцире ăмăртса Совет Союзĕн уйрăм йĕлтĕрçисенчен ылтăн медале Мускав хĕрĕ Любовь Козыревăпа /1956/ Свердловск облаçĕнчи Клавдия Боярских /1964/ кăна тивĕçнĕ. Арçынсен команди 1956 çулта эстафетăра çĕнтернĕ. Хĕллехи 10-мĕш Олимпиадăра совет йĕлтĕрçисем пĕр медаль те çĕнсе илеймен. Анчах та çакна палăртма кăмăллă: Чăваш АССРĕн ултă хут чемпионĕ, Раççей тата СССР чемпионачĕсен темиçе хут призерĕ, çĕр-шыври Хĕç-пăшаллă вăйĕсен 23 çулти кĕçĕн сержанчĕ Владимир Воронков совет йĕлтĕрçисенчен Гренобльте кашни дистанцирех чи лайăх кăтартупа палăрнă. Классикăлла дистанцире /30 çухрăм/ Олимп чемпионĕ ятне пуçласа Итали спортсменĕ Нонес Фронко çĕнсе илнĕ. Ăна тата иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăннă Норвеги тата Финлянди йĕлтĕрçисене выляса ярса Владимир тăваттăмĕш вырăна тухнă. Унăн командăри юлташĕсем А.Акентьев, В.Веденин, В.Тараканов, Ф.Симашев тĕрлĕ дистанцире 2-3-мĕш теçеткери вырăнсене кăна йышăннă.

Владимир Воронков тĕнче чемпионатĕнче пуçласа 1970 çулхи нарăс уйăхĕнче ăмăртнă. Эстафетăра Совет Союзĕн чысне унта пирĕн ентешсĕр пуçне В.Тараканов, Ф.Симашев тата В.Веденин хÿтĕленĕ. Чехословакири Штребске-Плесо хули çывăхĕнчи Çÿллĕ Татра сăрт-ту хысакĕнче вырнаçнă хĕллехи спорт центрĕнче ирттернĕ тĕнчен 28-мĕш чемпионатĕнче Совет Союзĕн туслă квартечĕ вун çичĕ çĕр-шыв командине хыçа хăварса пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Совет йĕлтĕрçисем тепĕр икĕ çултан Японири Саппоро хули таврашĕнче иртнĕ XI Олимпиадăра та палăрнă. Хальхинче пирĕн çĕр-шыв чысне эстафетăра çÿлерех асăннă В.Воронковсăр, Ф.Симашевсăр тата В.Веденинсăр пуçне Мурманск облаçĕнчи Ю.Скобов та хÿтĕленĕ. Ун чухне 40 çухрăмлă дистанцие Совет Союзĕн команди 2 сехет те 04 минут та 47,94 çеккунтра вĕçлесе пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Тĕнче тата Олимп вăййисен чемпионĕ В.П.Воронков çур ĕмĕре яхăн ĕнтĕ Мускав облаçĕнче пурăнать. Владимир Петрович – Чăваш Енĕн чăн-чăн патриочĕ. Вăл çулленех тăван республикăна килет, çамрăк йĕлтĕрçĕсене спорт ăстаăхне ÿстерме пулăшать. Канаш хулинчи спорт шкулĕ 1990 çулсенчен пуçласа олимпиец ячĕпе хисепленет. РСФСР тава тивĕçлĕ тренерĕ В.Я.Григорьев пуçарнипе Канашра çулленех Владимир Воронков парнисене çĕнсе илессишĕн Атăл тăрăхĕнчи йĕлтĕрçĕсем вăй виçеççĕ. Йăлана кĕнĕ кăçалхи ăмăртусем пуçланас умĕн пирĕн мухтавлă ентеш 75 çул тултарчĕ. Юбиляра çак паллă кунпа ЧР Пуçлăхĕ М.В.Игнатьев ăшшăн саламланă, физкультурăпа спорта аталантарас ĕçре пысăк тÿпе хывнăшăн тав тунă, алла çыхмалли ылтăнланă сехет парнеленĕ.

40-50 çул каялла çуллахи сезонта Шупашкарта тата Çĕмĕрлере, Вăрмар, Патăрьел, Комсомольски, Çĕмĕрле тата ытти хăш-пĕр районта велосипедпа чупасси вăй илнĕ. XX Олимп вăййисем пуçланиччен Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă Валерий Ярдысăр пуçне СССР спорт мастерĕн ятне тата вунă çын тивĕçнĕ: ЧППИ доценчĕ Герольд Илларионов, Çĕмĕрле хулинчи Павел Макаров, Муркаш районĕнчи Владимир Шалтыков, Елчĕк районĕнчи Луиза Дмитриева, Шупашкарти тĕрлĕ предприятире ĕçленĕ тата аслă шкулсенче вĕреннĕ Зоя Тимофеева, Зоя Ефремова, Нина Иванова, Светлана Иванова, Галина Трофимова тата паллă тренер Владимир Краснов.

В.Красновпа В.Ярды республикăри физкультурăпа спорт аталанăвĕн историйĕнче питĕ тарăн йĕр хăварчĕç. 1970 çулхи çурла уйăхĕн 13-мĕшĕ. Аслă Британири Лестер хули. Унта велосипед спорчĕ енĕпе тĕнче чемпионачĕ пуçланнă. 100 километрлă дистанци стартне вăтăра яхăн çĕр-шыв команди тухнă. Велосипедистсенчен чылайăшне сăртлă трасса çеç мар, начар çанталăк та шиклентернĕ. Шăпа тăрăх Совет Союзĕн команди маларах старт йышăннă. Çавна май XIX Олимп вăййисен чемпионĕсем пулнă голландецсем тата Пĕтĕм тĕнчери ăмăртусенче палăрнă Итали, Аслă Британи, Бельги, Польша, Чехословаки велосипедисчĕсем вĕçĕмсĕрех пирĕн команда мĕнле хăвăртлăхпа пынине пĕлнĕ. Англири ăмăртусем мĕнле вĕçленни çинчен Валерий Ярды ВЛКСМ республика комитетĕнче йĕркеленĕ пĕр тĕл пулура çапларах каласа панăччĕ:

– Финиша çитме вунă çухрăма яхăн юлсан эпир чехсене 13 çеккунт выляса янине пĕлтĕмĕр. Шăп çавăн чухне ĕнтĕ пирĕн тĕп тренер, Олимп вăййисен чемпионĕ Виктор Капитонов, мегафонпа кăшкăрса эпир мала тухма пултарассине пĕлтерчĕ. Ăçтан тухрĕ-ши çавăн чухлĕ вăй – эпир чăннипех те çĕнтертĕмĕр.

Чул хулари Валерий Лихачевран, Омскри Владимир Соколовран, Борис Шухов кабардинецран тата Çĕмĕрле районĕн каччинчен тăнă команда финиша çитеспе 28 çеккунт выляса илнĕ. Çапла майпа совет велосипедисчĕсем пуçласа тĕнче чемпионĕ ятне тивĕçнĕ. СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ В.А.Капитонов хатĕрленĕ туслă команда 1972 çулхи авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче Германири Мюнхен хулинче Олимп вăййисен чемпионĕ ятне çĕнсе илнĕ. Ун чухне 102,8 километрлă дистанцире иккĕмĕш вырăн йышăннă Польша квартечĕ пирĕн велосипедистсене çур минута яхăн выляса янă.

Иртнĕ кăларăмсенче эпир бокс енĕпе XIX Олимп вăййисен чемпионĕ ятне çĕнсе илнĕ Валериан Соколов çинчен тĕплĕн каласа патăмăр. Ăна Европа тата тĕнче чемпионачĕсене хутшăнма тÿр килмен. Чăвашсен пирвайхи Олимп чемпионĕнчен çичĕ çул кĕçĕнрех ун çывăх юлташĕ, Валериан пекех ял хуçалăх институчĕн механизаци факультетне пĕтернĕ, Муркаш районĕнчен тухнă Валерий Львов 1978 çулта Белградра тĕнче чемпионĕ ятне çĕнсе илнĕ. Шел те, çăмăл виçеллĕ боксера тĕрлĕ сăлтава пула Олимп вăййисене хутшăнма май килмен.

1992 çулччен пирĕн республикăри спортсменсенчен тĕнче тата Олимпиада чемпионĕсен ылтăн медалĕсене тивĕçнĕ икĕ çын кăна пулнă: Валерий Ярды велосипедистпа Владимир Воронков йĕлтĕрçĕ. Чăваш халăх хаçачĕн «Хыпарăн» çитес эрнери кăларăмĕсенче эпир Олимп тÿпине хăпарнă, тĕнче тата Европа чемпионĕ ятне темиçе хутчен çĕнсе илнĕ ентешсем çинчен тĕплĕнрех каласа парăпăр.

■ **Петр СИДОРОВ**

ПИРĔН ЙĂХТАШСЕМ ПИРКИ ТĔНЧЕРИ ЧЫЛАЙ ÇĔРШЫВРА АРДАЛИОН ИГНАТЬЕВ 1954 ÇУЛТА КĔСКЕ ДИСТАНЦИСЕНЕ ЧУПАССИПЕ ЕВРОПА ЧЕМПИОНĔ ЯТНЕ ÇĔНСЕ ИЛСЕН ТАТА ТЕПĔР ИКĔ ÇУЛТАН АВСТРАЛИРЕ ИРТНĔ XVI ОЛИМП ВĂЙЙИСЕНЧЕ ВИÇÇĔМĔШ ВЫРĂН ЙЫШĂНСАН КĂНА ПĔЛМЕ ПУÇЛАРĔÇ

***Чăваш тĕнчине, унăн пур шанчăк-ĕмĕтне сирсе сирĕлми хура чаршав хупласа тăнă саманара вун çичĕ çулти поэт чун-чĕринчен «Нарспи» поэма шăранса тухать. Ытарайми çав Илем тĕнчине пултарнă поэт кун çути курнăранпа часах 125 çул тулать. Пĕр ÿстермесĕр каламалла: пирĕншĕн Нарспипе Сетнерĕн ăраскалсăр кун-çулне сăнласа халĕччен каламан сăмаха калама /е чăнлăха халăхăмăр чĕрине хывма!/ пултарнă генилле художник этемлĕх культурин асĕнче упранакан пророксен – Конфуций, Будда, Зороастр, Мухаммед – ячĕсене калама çук çывăх.***

# Тивлетлĕ чун-хавал çути



Сергей ЖУРАВЛЁВ сăн ÿкерчĕкĕ

Çук, аслă Пÿлĕх пире те, чăвашсене, пайсăр хăварман. Пирĕн те хамăрăн «Мекка» пур, кÿршĕри мусульмансенни пек; ăна Слакпуç тесе шухăшлас пулать пирĕн, ним иккĕленмесĕр. Сăмах май, ислам тĕнне ĕненекенсенчен кашниех Мухаммед çуралса çитĕннĕ, çĕре кĕнĕ вырăнсене пĕр хутчен те пулин çитсе каабăна /хура чул/ пуç таяссине сăваплăран та сăваплă тивĕç тесе шутлать. Статьяра ку ыйтăва тĕплесех хускатма май килмест пулин те каласа хăварасшăн: пĕтĕм Раççейĕпех 2015 çула Литература çулталăкĕ вырăнне картса анлăн паллă тунă май çав сулăмпах Аслă поэтăмăрăн юбилей каçĕпе çеç çырлахмасăр, ун пурнăçĕпе ĕç-хĕлне, пĕтĕм эткерне хальхи куçпа шĕкĕлчесе тухма, тарăнрах тĕпчеме, çĕнĕлле хаклама, пур майпа та усă курса ăна халăх хушшинче анлăрах сарма, хăйĕн сăнарне тата та туллинрех уçса палăртма мĕн тери ал май пирĕншĕн çак сăваплă çул. Пин-пин туристшăн тăван поэтăмăр çуралса çитĕннĕ, ĕмĕрлĕхе канлĕх тупнă сăваплă вырăнсене çитсе курма чунĕпе ĕмĕтленекенсемшĕн ятарлă маршрут уçма та май килмелле пек. Паллах, унта çитсе курмалли-сăнамалли, пуç таймалли вырăнсене палăксене цивилизаци шайĕпе йĕркелемелле, ăна валли укçа-тенкĕ кирлĕ; анчах пирĕн мĕскĕнлĕх укçаран çеç килмест, тĕлĕрекен чунсене вăратма йывăр.

«Пит каясчĕ вăл çĕр-шыва. Укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен хĕнтерех пулас пек те, çапах та пĕр шухăш тытсан ун пек вактĕвексене пăхса тăмалла мар», – çырать Митта Ваçлейĕ хăйĕн тусĕ Петĕр Хусанкай патне 1927 çулта. Чăваш культурин шайне çÿллетекенсем иккĕшĕ те ун чухнех пĕлсе тăнă: Ясная Поляна, Карабиха, Болдино, Турхан йышши сăваплă çĕр-вырăн чăвашсене те сывлăш пекех кирлĕ. Анчах та эпир ытлашши сăпайлă /е инертлă?!/ пулнăран-ши, пирĕн йышушкăн çавнашкал амбициллĕ проектсем тума туртăм-хавал шырасшăн та мар, тупас та темест. Хамăр телее çавăрăнса килнĕ меллĕ вăхăтпа усă курас, чĕлхемĕре, культурăна, нацилле хамăра евĕрлĕхе упраса хăварас, пĕтме парас мар тесен пирĕн чылай маларах вăранса, çак асăннă проекта пурнăçа кĕртес тĕллевпе хыпăнса ĕçлемеллеччĕ. Шухăшласа пăхăрха, ун чух эпир мăнаçланса çулсемйĕрсем пурте Слакпуçа /Рим еннелле мар!/ илсе каяççĕ теме пултарнă пулăттăмăр. Унта вара кĕвĕçÿ, курайманлăх, усаллăх тата ытти киревсĕр туйăм-сунăмсене çылăхсенчен Константин Васильевич тасалăхĕпе тасалса, сывалса, чуна тултарса та çунат хывса, гений халалĕпе хавхаланса таврăнма пултарăттăмăр. Чăваш тĕнчи ăмсанмалла шалпарланнă пулĕччĕ, наци туйăмĕ тымарĕсем те тарăнланĕччĕç, хевтемĕр ÿсĕччĕ.

Чуна хĕртсе кулянтараканни çителĕклĕх-ха паян. Юлашки икĕ-виçĕ çулта Константин Васильевич Иванов пурнăçĕпе пултарулăхне тарăнрах тĕпчеме те, кĕнеке кăларма та май килчĕ. Поэт хавхаланулла хавалпа пултарнă Илем тĕнчине ăнланса, чунпа туйса илес тесен вăл çуралса ÿснĕ вырăнсене çитсе курмалла, унти сывлăшпа сывлас пулать. Сăмахран, çынсем çырни, аса илнисем тăрăх – Слакпуçра ун çывăхĕнчи вырăнсем, юхан шывсемпе ту хысакĕсем, улăх-çарансемпе валаклă çăл куçсем манăн ăшăмра самаях усăмлă ÿтленсе ÿкерчĕкленнĕн туйăнатчĕç. Çук иккен, вĕсене хăвăн куçупа курса сăнамалла, пытарăнчăк сăн-пулăма хăвăн асăрхаса «уçмалла», тен, хальччен никам та курманни те курăнса кайĕ.

…Силпи улăхĕ… Вĕлтрен пусса илнĕ талккишпех, хупахлăх ашкăрать лаптăкăн-лаптăкăн… Çурт вырăнĕсен путăкĕсем урăх ним те юлман пек темиçе ĕмĕр каярах пурнăç вĕресе тăнă вырăнта нумай-нумай çул иртнĕ хыççăн. Поэмăри Силпи ялне сăнланă чух миçе хутчен килсе, ĕмĕчĕсемпе хавхаланса, телейсĕр

## НАРСПИПЕ СЕТНЕР ЮРАТĂВĔ ВĂЛ – СĂВАПЛĂ, ÇÿЛЛĔ ШАЙРИ ТĔСЛĔХ

шăпасемшĕн кулянса, тен, куççуль кăларсах, шухăша кайса ларнă-ши поэтăмăр?! Инçе те мар ансăр çеç Силпи юхса выртать, кунта вăл мĕн ачаран пулла çÿренĕ. Асамлă вырăн чуна сисĕмлетет, туйăма çивĕчлетет: ура айне тимлесерех пăхсан гений утăмласа пуснă вырăнсенче халь те палăри-палăрми йĕрсем курăнса каяссăн туйăнса каять, хам вара, пин-пин чăваш çынни пекех, унăн вилĕмсĕр чунĕпе темле пытарăнчăк çыхăнура пулнине тĕтре ăшĕнчи пек ăнкаратăп. Поэмăри Силпи ялĕ куç умĕнчех чĕрĕлет, çурт вырăнĕсен лакăм-тĕкĕмĕсене вĕлтрен пусси пусман та тейĕн; вĕсен вырăнĕнче самантра Кантăр варĕ сарăлса тăнă пек, темиçе йăмра, тен, вĕсенчен пĕри Нарспи çакăнса вилниех? Чĕре хытăрах тапма пуçланине туйса «вăранатăп».

Кайрăклă ялĕ пек юратнă, чуна çывăх вырăн поэтăмăрăн урăх çĕрте пулнă-ши? Кукамăшĕ Слакпуçне хăнана пымассерен ăна хăйпе пĕрле Кайрăклăна илсе кайнă, савнă мăнукне чун ирĕклĕхне йÿле яртарса, çын ăшшипе пиелесе, утькка сиктерсе «ачашланă» пек пăхнă. Çирĕп тымарлă, çитетлĕ пурнăçпа пурăнакан кил-йыш, чи çывăх тăванĕсем, пулас поэта мĕн кирлине йăлтах пама мехел çитернĕ. Кукамăшĕпе кукашшĕ те, куккăшĕпе инкĕшĕ те… Юнашар килĕн хуçи куççăр Макçăм патне иленет Кĕçтук, мĕн чухлĕ юмах-халап, юрă-кĕвĕ, сăнарлă сăмах çаврăнăшĕ çыра-çыра илет вăл унран. Кайрăклă урамĕпе утнă май шутсăр кивелсе кайнă çуртсем /пăт-пат самансем/ час-час куçа курăнаççĕ. Часрах Константин Васильевич киле-киле, эрни-эрнипе пурăнма юратнă хаклă çурт патне çитме васкатăп. Анчах та пысăках мар пÿрт умне тухса ларнă ватă хĕрарăм, Максимова Таисия Георгиевна, çав çурт тахçанах çĕр питĕнчен çухаллине, вăл ларнă вырăна мĕнле урампа тухмаллине ăнлантарса пачĕ. «Куккăшне, Алексей Васильевича, кулак тесе инçе çĕре ăсатнă. Тĕп çурчĕн вырăнĕнче кирпĕч ишĕлчĕксем пурччĕ тахçан. Кантур çуртне тунă чух усă курса пĕтерчĕç. Халь çурт вырăнĕнче фельдшер пункчĕ».

Шыраса тупма йывăр пулмарĕ. Çуртăн йĕрри-палли те юлман. Анчах кăрт-кăрт тапакан чĕре йышăнасшăн мар чăн пуррине, хирĕçлет… Ларнă вĕсем çак вырăнта тем тесен те куккăшĕн çурчĕ те, Макçăм юмăçăн та. Килсе çÿренĕ поэт кунта, пурăннă, тавралăх илемĕпе киленнĕ, чи телейлĕ, хавхаланулла саманчĕсем унăн çакăнта иртнĕ. Çакна туйса, ĕненсе тăни пире хăех пурнăç тĕрекĕ, шанчăк парать, эпир пуласлăхсăр маррине ĕнентерет.

Паян шухăшлатăн та, мĕн чухлĕ ăсхакăлпа чун пуянлăхĕ парса хăварнă тăван халăха çав тери кĕске ĕмĕр пурăнса ирттернĕ гени. Тĕнче культурин сĕткенне чуна сăрăхтармасăр вăл «Нарспи» поэмăна çырма пултарайман пулĕччĕ. Çак çунат çĕкленĕ ăна вилĕмсĕр классика шайне, И.Я.Яковлев шкулĕнчи хатĕрленÿ класĕнче вĕренекен, вун виçĕ çултискер, курăр-ха, камсене суйласа илсе вулать. Пушкин, Лермонтов, Гоголь, Гёте, Гейне, Жюль Верн, Майн Рид, Виктор Гюго, Достоевский, Данилевский, Салиас, Лесков, Гончаров… Кăна Трубина Мархви аса илĕвĕнчен пĕлетпĕр.

Юратнă поэтăмăр совет саманине пурăнса çитеймен, çавăнпа та хăй пултарнă вилĕмсĕр сăвă-поэмăсемшĕн гонорар таврашĕ илме те, ун çинчен шухăшлама та пултарайман. Пархатарлă та таса ĕмĕт-тĕллевпе пурăннăскер, вăл хăй халăхне пур майпа та тĕттĕмлĕхпе танмарлăхран çăлса кăларасшăн хыпăнса çуннă, турă панă тивлетлĕ талаватне ăна сапăррăн парнеленĕ. «Халăхăм çеç хăйне сывă, телейлĕ, танлă, мал ĕмĕтлĕ туйтăрччĕ, чи кирли çакă», – тесе шухăшланă вăл.

Этем пурнăçĕн кашни саманчĕ ырăпа усал хушшинче иртет, кашни хăй суйласа илнĕ сукмакпа утать. Нарспи те савнийĕпе пĕрлешсе телейлĕ пулма ĕмĕтленетчĕ, вăл тĕнче çине тин çурăлакан папка куçĕпе тасан пăхатчĕ. Çавăнпа чăн малтан К.Иванов идеалне ăнланса илес пулать. Поэт пысăк сас паллипе çырăнма тивĕçлĕ чăн-чăн таса юратăва аслăлать, ун ячĕпе гимн хывать. Нарспипе Сетнер юратăвĕ вăл – сăваплă, çÿллĕ шайри тĕслĕх, укçалла туянакан юратăва сивлекен, чун сассине хуплама килĕшмен çынсене поэт чăваш хутлăхĕнче курнă, хăй вара вĕсен «ваккачĕ пулса» вилĕм урлă вилĕмсĕрлĕхе тухакан икĕ çамрăк чунăн тĕслĕхне тĕнче умне кăларнă. Нарспипе Сетнер чун-чĕринчи чыс туйăмĕ тĕнче литературин чи сумлă та пархатарлă тĕслĕхĕсемпе пĕр шайра. Тепĕр хут калатпăр – «Нарспи» авторĕ рецепт сĕнмест, ун тĕллевĕ пачах тепĕр майлă: вăл хытнă чунсене çемçетесшĕн /«ватă чун та хытă чун, хытса кайнă кĕççе çав»/, чунсăрлăх, çамрăксен кăмăлне таптаса хуçни, ирĕксĕрлени мĕнле хăрушă инкек патне çитерме пултарассине витерÿллĕ сăнласа ÿкерет. Çакăнта ĕнтĕ трагедилле ÿнер вăй-хăвачĕн пĕçерттерекен сывлăшĕпе кăварĕ, унпа пĕрлех чуна тасатакан сипечĕ.

Яш чĕресен инкекĕ çынсенчен çеç килмест текен шухăш та пулнăн туйăнать тарăн философиллĕ поэма тытăмĕнче. Çук-ха, епле пулсан та таса та сывă туйăмсене хуплакансем чăн малтан хĕрĕн ашшĕ-амăшĕ тата хăлăхсăр Тăхтаман пулчĕç. Мĕншĕн хăлăхсăр? Ма тесессĕн хулăм укçипе хĕр ашшĕне çырлахтарнă, йăлана та пăсмасть вăл, ытти пĕтĕмпех вак-тĕвек уншăн. Юрату хытнă чунсемшĕн – мираж çеç, тута çинче амăш сĕчĕ типменни. Хăйсем вĕсем пурнăçĕнче юратса курман, çав туйăм мĕн иккенне пĕлмеççĕ. Автор пуçласа уйрăм çын явăплăхĕпе тивĕçĕ пирки ыйтăва çав тери тарăннăн лартать: пĕччен çын енче тĕрĕслĕх пулма пултарать-и? Нарспи пăхăнманлăхĕ /е йăла-йĕрке пусмăрĕ!/, пĕр сăмахпа, пилĕк виле патне илсе çитерет. Трагедилле роле «вылякансенчен» пĕри те хăйне хăй айăплă тесе шутламасть. Чун-чĕре алăкĕсене шаккаса уçтарайман поэт синкерлĕ лару-тăрусен сăлтавне ÿнерçĕ куçĕпе тимлесе тишкерет, паллах, пире те, вулакансене, диалога хутшăнма йыхăрать.

Шухăшлатăн та, мĕн пысăкăш парăм пирĕн пурсăмăрăн та хамăр халăха вилĕмсĕр «Нарспи» поэмăпа тĕнчери чĕлхесемпе культурăсен диалогне хăюллăн та танлăн хутшăнма май туса панă генилле поэтăмăр умĕнче!

**Юрий АРТЕМЬЕВ**

ЙĔПЛĔ КАРТА ЛЕШ ЕНЧЕ

# «Манăн айăпа пула хĕрĕм амăшĕсĕр ÿитĕнет»

***ФСИНăн республикăри управленийĕн Çĕрпÿ районĕнчи сипленсе юсанмалли 7-мĕш учрежденийĕ пирки хăйне евĕрлĕ колони теççĕ. Сăлтавсăр мар – судпа айăпланнă хĕрарăм наркомансене, ĕçкĕççене сиплекен пĕртен пĕр учреждени, Раççейре унашкалли урăх çук. Çавна май федерацин Атăлçи округĕнчи общество сăнав комиссийĕсен членĕсене явăçтарса Чăваш Енре ирттернĕ семинара килнисем шăпах унта пулса курас тени пĕртте ăнсăртран мар. Хăнасемпе пĕрле «Хыпар» корреспонденчĕн те колони пурнăçĕпе паллашма май пулчĕ.***

Республикăра – хĕрарăмсен 3 колонийĕ. Кунта вара, каларăм, преступлени туса судпа айăпланиччен наркотиксемпе усă курнисем йышлă. Эпир пулнă кун контингент йышĕ 721 çынпа танлашать терĕç. Раççейĕн тĕрлĕ-тĕрлĕ кĕтесĕнчен. Чăваш Енрен нумай тееймĕн – 16 çын.

Тĕрлĕ регионăн сăнав комиссийĕн членĕсем чи малтанах столовăйпа паллашас терĕç. Çĕр-шывра кăна мар, чикĕ леш енче те лайăх пĕлекен право хÿтĕлевçи, РФ Президенчĕ çумĕнчи Граждан обществин аталанăвĕ тата çын прависем енĕпе ĕçлекен канаш членĕ, Общество сăнав комиссийĕсен /ОНК/ канашĕн президиумĕн председателĕ Мария Каннабих, колонисенче час-часах пулаканскер, кунашкал учрежденисенчи çитменлĕхсене лайăх пĕлет, çавăнпа кашни вак-тĕвекпе кăсăкланчĕ. Анчах вăл та кунта «чăкăлташмалли» самантсене асăрхамарĕ пулас. Умывальникре шыв пур, апатланма килекенсем валли супăнь савăчĕ те лартнă, пур çĕрте те таса, тирпейлĕ.

Мария Валерьевна столовăйра ĕçлекен айăпланнисен шалăвĕпе те кăсăкланчĕ. Аслă поварăн Людмила Овчинниковăн – 4 пин тенкĕ ытларах, чи пĕчĕк ĕç укçи чухлĕ ĕнтĕ. Алла тухаканни – 2 пин ытларах, ыттине тытса юлаççĕ: апатланнăшăн, ытти тăкак. Людмилăна 10 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварнă. 7 çул ларма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Приговор вăхăчĕ вĕçлениччен ирĕке тухасса шанать. Ачисем-и? «Шел те, манăн ача çук...» – пăшăрханса пĕлтерчĕ хĕрарăм.

Сăнав комиссийĕн членĕсем менюпа, апат нормисемпе те интересленчĕç. Паян ирхине сĕтпе пĕçернĕ тулă пăтти панă. Кăнтăрлахи апат – купăста яшки, шаркку. Эпир пынă чухне касхи апат хатĕрлетчĕç: хура тул пăттипе ăшаланă пулă сĕтел çине лартĕç. Айăпланнисен мĕнешкел пысăк «çарне» тăрантмалла та – кухньăри хурансем пысăк, йышлă. Апата айăпланнисем хăйсемех хатĕрлеççĕ – колонирех ятарласа повара вĕреннĕ бригада ĕçлет.

Нормăсене илес тĕк – хăнасем хăйсем те палăртрĕç: хăшпĕр колонире ларакансем хăйсене аш çителĕклĕ памаççĕ тесе кăмăлсăрланаççĕ. Анчах чылай чухне çак кăмăлсăрлану сăлтавсăр. Айăпланнисем темшĕн-çке, сăмахран, сысна ашĕн çуллă пайне какай вырăнне хумаççĕ. Анчах нормăра çуллипе тачкине уйăрман, сала та – ашах.

Малалла утатпăр – хĕрарăмсем пурăнакан общежитие кĕретпĕр. Çарти казарма йышши темиçе пÿлĕм, 2 хутлă краватьсем... Хĕрарăмсем пурăнаççĕ темерĕн – йĕритавра таса та илемлĕ. Кашни пÿлĕмĕн – хăйĕн тĕсĕ: пĕринче, тĕслĕхрен, каркăççемпе стенасем сутă симĕс тĕслĕ, тепринче сарă... «Тĕссене хĕрсем хăйсем суйлаççĕ», – ăнлантарчĕç колони ĕçченĕсем.

Кунта айăпланнисемпе те калаçма май пулчĕ. Зэксен хушшинче «мана тĕрĕс айăпларĕç» тесе калакан сайра теççĕ, çавна май корреспондентпа сăмахланă, УК 228 статйипе /наркотикшăн/ суд умне тăнă Анна Шевелева калани кĕтменлĕх пулмарĕ. «Мана 0,48 грамм наркотикшăнах хупрĕç, – тет Саратов хĕрĕ. – Ман пеккисем вара кунта нумай. Хам валли туяннăччĕ, хĕр тусăм хăналама ыйтрĕ те – патăм. Çакăншăн айăпларĕç...»

Çапах вăл та кунти условисене лайăх тесе хаклать, маларах пулнă колонири условисене хурлать. Инçетри Анат Тагилти колонирен сипленес тĕллевпе кунта куçнă Светлана Осинцевăпа Наталья Ловинская шухăшĕ те çапларах: «Кунти тата лери условисем – çĕрпе пĕлĕт пекех. 7-мĕш колони сотрудникĕсем те ырă кăмăллă». Хĕрарăмсем сăнав комиссийĕн Екатеринбургран килнĕ членĕсемпе ятарласа курнăçас терĕç – пĕтĕмпех ыйтса пĕлме тăрăшрĕç. Ентешĕсене курнăшăн чăннипех савăнчĕç: «Калаçу уйрăмлăхĕсем те – пирĕн, тăван!»

> ПИРЕ ХИРĔÇ ВАРА АЙĂПЛАННИСЕН ТЕПĔР УШКĂННЕ ИЛСЕ КĔЧĔÇ. ÇАМРĂКСКЕРСЕМ, ИЛЕМЛĔСКЕРСЕМ – ТЕМ ТЕСЕН ТЕ ÇАКĂНТА ТЕМИÇЕ ÇУЛ ИРТТЕРМЕ ÇУРАЛМАН ĔНТĔ. МĔН ТĂВĂН, ÇАК ШĂПАНА ВĔСЕМ ХĂЙСЕМ СУЙЛАСА ИЛНĔ

Светланăн кăкăр çинчи сăн ÿкерчĕклĕ, хушаматлă табличкинче «Категория п/у» тесе çырнине асăрхаса сисчĕвлентĕм. Ку мĕне пĕлтерет? «Суицид...» – пуçне пĕксе пăшăлтатрĕ хĕрарăм. Хăйĕн çине алă хума тăнă иккен, унашкаллисем – уйрăм категори. «П/у» – «профучет» тенине пĕлтерет. Чăннипе вара кунта тем тĕрлĕ преступлени тунисем те пур. Эпĕ паллашнă Вера М., авă, çынна çĕçĕпе чикнĕшĕн ларать. «Çапла, çын вĕлернисем те пайтах, – кулса калаçрĕ хĕрарăм. – Апла пулин те пĕтĕмĕшле илсен эпир ырă çынсем».

Колони территорийĕнче кăçал кăна психиатри больницин çĕнĕ çуртне хута янă – сăрă шăрши те сĕвĕрĕлсе пĕтмен-ха. Медперсонал – 17 çын. Кунта стационарта сипленекенсем вара – çиччĕн кăна. Çавна май хăнасем медучреждени хăвачĕпе туллинрех усă курмаллине палăртрĕç. Ĕçлесе кайтăр-ха – пациентсем пулĕç. Хальлĕхе вара кусене сиплемелле. Тутарстан хĕрарăмĕшĕн Ильса Гильмутдиновăшăн ОНК членĕсемпе курнăçни усăллă пулатех-тĕр. Хĕрарăмăн 6 тата 7 çулсенчи икĕ ача. Унашкаллисем приговора пурнăçлассине ачисем 14 çул тултариччен каяраха хăвармалли правăпа усă курма пултараççĕ. Анчах Ильса тĕслĕхĕ урăхларах – вăл кунта алкоголизмран сипленет. «Хăв çине тăтăн тăк – ирĕке тухма пултаратăн, – сĕнчĕç ăна хăнасем. – Кăмăлна хытарса сипленмелле, сывалсан ирĕке кăларма ыйтса çыр».

Сăмах май, ку колонире ВИЧ-инфекциллĕ хĕрарăмсем те пур – 204 çын. Унччен вĕсене уйрăммăн тытнă, халь – тĕрлĕ отрядра. Ыттисем чирлисемпе хутшăнма шикленмеççĕ-и? «Çук, хăрамаççĕ, ВИЧ-инфекци сывлăш урлă ермест вĕт, – ăнлантарчĕç колони сотрудникĕсем. – Çавна май пирĕншĕн те вĕсем ыттисемпе танах».

Производство корпусĕнче /колони çĕвĕ ĕçĕпе специализациленет, вăй тытăмĕсем валли форма, ытти тумтир çĕлет/ Мария Зыковăна асăрхасан тĕлĕнтĕм те – пăхма ытла та çамрăк-çке, 18 çул тултарайман та пуль... «27 çулта эпĕ, – тĕлĕнтерчĕ хĕр. – Наркотике пулах кунта лекрĕм. Ирĕке тухиччен тата 6 уйăх кăна юлчĕ». Кунта темиçе çул ирттернĕ май упăшки унран сивĕннĕ-мĕн. Юсанмалли учрежденипе сыв пуллашсан мăшăрĕпе каллех çывăхланасса шанать.

Унăн ĕçтешне Ольга Семеновăна та, Тверь хĕрне, 31 çул параймăн – илемлĕскер, вăл та сăнĕпе чылай çамрăкрах. Лармалли тата çулталăк та 4 уйăх юлнă-ха. Чăн та, вăл та кунтан иртерех, вăхăт çитмесĕрех условнăй майпа тухма ĕмĕтленет: «Çитес хĕлле шанăç пур». Ĕçре маттуррине шута илсен – тухатех пуль. Маттур тенĕрен, ку унăн шалăвĕн виçинче те палăрать – уйăхра 8 пин ытла тухать. Анчах çуррине тытса юлаççĕ, тепĕр çурри колонири лавккаран ăна-кăна туянса пĕтет. Пухса пымашкăн çитмест çав. Апла пулин те ирĕкри тăванĕн ачине парне илсе ярса пама пултарнă. Ирĕкре вăл юриста вĕренсе тухнă, анчах текех çак специальноçпа ĕçлеймĕп ĕнтĕ тесе пăшăрханать. ОНК членĕсем ăна шанăç пачĕç: патшалăх тытăмĕнче мар тăк – ытти çĕрте те юристсем кирлĕ вĕт. Ирĕкре кĕтекен çывăх çынни пур-ши? «Качча кайман эп, – пулчĕ хурав. – Савни-и? Паянхи каччăсем вĕсем каччăсем-и вара?!» Çук, тавлашас темерĕм.

ШИЗО – кунта колонири режима, йĕркене пăснисем кăна лекеççĕ. Арçынсен учрежденийĕсенче, тен, урăхларах пуль, анчах хĕрарăмсем штраф изоляторĕнче йышлă мар. Камера йышши пÿлĕмре – пĕр çын кăна. Мускав хĕрне Юлия Писанкинăна Хакасири колонирен кунта куçарнă. «Йĕркене лере пăснăччĕ – пĕрле ларакансемпе тытăçса кайнăччĕ, çавăншăн, акă, кунта явап тытатăп – ПКТра уйăх çурă ĕнтĕ», – ăнлантарать вăл. Судпа иккĕмĕш хут айăпланнă. Ирĕке тухнă та – каллех наркотик тыткăнне лекнĕ: «Чарăнаймарăм... Сипленес тесе кунта куçарма хам ыйтрăм. Лере манăн йĕркене пăсмасăр пĕр эрне те иртместчĕ. Е кампа та пулин хирĕçетĕп, е колони сотрудникне «эсĕ» тетĕп...» Ача çуртĕнче çитĕннĕ вăл – çакăн витĕмĕ те пур-тăр. Унтан кайсан вара пурăнмалли кĕтессĕр юлнă – ĕçкĕпе иртĕхекен ашшĕпе амăшĕ хваттерне сутса янă...

Изоляторти режим çирĕп. Çапах камерăсенче телевизор пур – вăхăта ирттерме пулать. Телекуравĕ, паллах, кабельпе килекенни кăна, кашни каналпа кăларăма пăхаймăн – «цензура» ĕçлет, айăпланнисене воспитани парассипе килĕшсе тăракан кăларăмсене кăна пăхаяççĕ.

Арçынсен колонийĕсенче ШИЗОна чи нумаййи 6 уйăхлăха хупма пултараççĕ, хĕрарăмсен ку енĕпе «çăмăллăх» пур – 3 уйăхран ытла мар. ПКТран талăкра пĕр хут кăна уçăлма илсе тухаççĕ – сехет çурăлăха. Ирхине 6-ра тăмалла, кун каçа вырăн çине выртма юрамасть, 10-ра – «отбой». Табак туртас килсен вара? Камерăра туртма юрамасть, уçăлма илсе тухсан кăна мăкăрлантарма юрать. Талăк тÿсмелле-и? «Тÿсме тивет çав, – хуравларĕ изолятор ĕçченĕ, – çавăнпа хăшĕсем туртма пăрахаççĕ. Туртма юраманшăн хĕрхенме кирлĕ мар-тăр – вĕсене кунта лекме никам та хистемен вĕт».

Кунта курни-илтнине сăнав комиссийĕн членĕсем колонин акт залĕнче пĕтĕмлетрĕç.

– Пĕтĕмĕшле илсен – йĕркеллĕ, – кăмăллă пулнине пытармарĕ Мария Каннабих. – «Вăтам» тесе хакланă пулăттăм, мĕншĕн тесен тĕрлĕ регионта кунтинчен чылай лайăхрах колонисем те пур, япăххисем те çук мар. Пур çĕрте те таса, тирпейлĕ. Пуринчен те ытла килĕшни – çынсен сăнĕнче кулă, ырăлăх палăрни. Çакă чи лайăххи.

...Эпир колони территорийĕнчен тухма хатĕрленетпĕр. Пире хирĕç вара айăпланнисен тепĕр ушкăнне илсе кĕчĕç. Çамрăкскерсем, илемлĕскерсем – тем тесен те çакăнта темиçе çул ирттерме çуралман ĕнтĕ. Мĕн тăвăн, çак шăпана вĕсем хăйсем суйласа илнĕ. Пысăк сумкисене йăтса иртрĕç. Хыçалтан хурал пырать. 7-мĕш колонири контингент йышне паян тата темиçе çын хутшăнчĕ. Апла тăк – ирĕкре хĕрсемпе хĕрарăмсен йышĕ пĕчĕкленчĕ. Юратма, ача çуратма, вĕсене çитĕнтерме тивĕçскерсем – çакăнта... Пĕр самант çеç çак кулянăва пусарать – пурте тенĕ пекех кунта лекнĕшĕн ÿкĕнни. Екатеринбург хĕрарăмĕ Светлана Гипаревич калани асран тухмасть: «Манăн айăпа пула хĕрĕм амăшĕсĕрех çитĕнет...»

**Николай КОНОВАЛОВ.**
Автор сăн ÿкерчĕкĕсем





● Тепĕр ушкăна илсе килчĕç – ОНК членĕсем вĕсемпе те калаçрĕç.

АТАЛАНУ ÇУЛĔПЕ

# Вырăнти тавара – симĕс çута

***Кăçалхи сакăр уйăхра Вăрмар райповĕн ĕç-хĕл калăпăшĕ 172,5 миллион тенкĕпе танлашнă. 142 миллион тенкĕлĕх тавар сутнă, общество апатланăвĕн тытăмĕ 42,5 миллион тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан кăтартусем чылай лайăхланнă.***



● Райпо ертÿçи Сергей Харитонов.

Райпо канашĕн председателĕ, Вăрмар хула тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Харитонов "Общепит" тулли мар яваплă обществăн /генеральнăй директорĕ Марина Сейфуллина/ ÿсĕмĕсемпе уйрăмах кăмăллă. Отрасль тупăшлă ĕçлет. Унăн кулинари цехĕсенче хатĕрлекен продукци пахалăхĕ те, ассортиментне те халăха тивĕçтерет. Кафесем, закусăчнăйсем, буфетсем, пиццери паянхи пурнăç ыйтăвĕсемпе килĕшÿллĕн аталанаççĕ. Поселокра пĕлтĕр хута янă "Светлица" кафе паян – район çыннисен юратнă вырăнĕ. Пурнăçри паллă кунсене унта уявласси ыра йăла пулса тăчĕ. "Юность" тата "Сказка" кафесенче те тус-тăванпа пĕрле пухăнса савăнма условисем çителĕклĕ. Сăмах май, кăçал "Юность" кафере кухньăпа цехсене юсаса хăтлăх кĕртнĕ, часах перекетлĕ ĕçлекен çĕнĕ котельнăй туса пĕтермелле. Хальлĕхе общепитăн район территорийĕнче 9 апатлану предприятийĕ. Палăртнă тăрăх тепре те пулмалла – 2015 çулта центрта ачасем валли ятарлă кафе уçма ĕмĕтленеççĕ.

Ăшă памалли сезон тĕлне çăкăр заводĕнче те перекетлĕ çĕнĕ котельнăй хута каймалла. Заводăн ĕçхĕлĕ, çитĕнĕвĕсем курăмлă. Кунта 80 тĕрлĕ продукци хатĕрлеççĕ. Ăна районта кăна мар, ун тулашĕнче пурăнакансем те хапăлласа туянаççĕ. Пахалăха лайăхлатсах пыма оборудование вăхăтра çĕнетни, хальхи технологисене алла илни, халăх ыйтăвĕсене шута илни пулăшать.

– Суту-илÿ отраслĕнче те юлашки çулсенче улшăнусем чылай пулчĕç. Çулсерен темиçе лавккана тĕпрен юсатпăр. Çав шутра – пысăкраххисене те, пĕчĕк ялсенчи тупăш паманнисене те. Ăшă, вĕри шыв, канализаци кĕртетпĕр, тултан, шалтан тĕплĕ юсаса илемлететпĕр. Ял лавккисем гигиена ыйтăвĕсене пур енлĕ тивĕçтерсен сутуçăсене ĕçлеме те меллĕ пулĕ, тавар туянма пыракансен те кăмăл тулĕ, – тет Сергей Николаевич. – Кăçал, акă, Пысăк Енккассинчи, Чулкаçри лавккасене водопровод, канализаци кĕртрĕмĕр. Кивĕ Вăрмарти лавккана юсарăмăр. Райцентртан 25 çухрăмра вырнаçнă Хĕрлĕçырти суту-илÿ точкине çĕнетрĕмĕр. Çак яла автобус та çÿремест. Тикашра анса юлсан тата 4 çухрăм утмалла. Ял халăхĕ лавкка çĕнелсе улшăннипе, тавар ассортименчĕ пуянланнипе çав тери кăмăллă пулчĕ. Халĕ Вăрмартан 26 çухрăмри Хуруйра çакăн пек юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Черет кĕтекенсем татах пур. Вĕсене те çĕнетме вăй çитересчĕ-ха.

Райпо ертÿçи тавар ассортименчĕ çинче уйрăммăн чарăнса тăчĕ. Чăвашпотребсоюз хăйĕн обществисен умĕнче лартнă тĕллеве пурнăçа кĕртсе республикăри тавар туса кăларакансемпе çирĕп çыхăну йĕркелеççĕ. Вырăнти продукцие поселокри "Органика" лавккара кăна мар, кашни точкăра нумай сутаççĕ. Цифрăсен чĕлхипе каласан райпон тавар çаврăнăшĕн пĕтĕмĕшле калăпăшĕнче хăйĕн общепичĕпе çăкăр завочĕн продукцийĕ – 11 процент, Чăвашпотребсоюзăн ытти предприятийĕн продукцийĕ – 24 процент, Чăваш Енри тавар туса кăларакансен продукцийĕ 40 ытла процент йышăнать. "Акконд-торг", "Акконд-агро" акционер обществисемпе, Шупашкарти çу-сыр базипе, Етĕрнери аш-какай комбиначĕпе, "Чăваш бройлерĕпе", Канашри, Вăрмарти чăх-чĕп фабрикисемпе, Элĕкри пахча çимĕç комбиначĕпе, ыттисемпе тахçантанпах килĕштерсе ĕçлеççĕ.

Вăрмар райповĕ халăхпа тачă çыхăну тытма тăрăшать. Пĕр-пĕрне ăнлансан, кирлĕ вăхăтра пулăшсан пурăнма та çăмăлрах, малашлăх та шанчăклăрах. Райпо ял çыннисенчен килти хуçалăхра туса илнĕ ытлашши продукцие туянать, тупăш илме май туса парать. Халăхран сĕт, аш-какай, çĕр улми, пахча çимĕç, эмел курăкĕсем, кивĕ хут, çĕтĕк, тир, полиэтилен йышăнаççĕ. Фермерсемпе те ĕçлеççĕ. Кăçал халăхран пухнă çĕр улмине сутса Чăвашпотребсоюз тытăмĕнче çур çулшăн 2-мĕш вырăна тухнă. Çав вăхăтрах потребительсен обществи ял çыннисене хушма хуçалăха аталантарма пулăшас ĕçе те хутшăнать, выльăх-чĕрлĕх тытакансене тырăпа тивĕçтерет. Çулталăкне 70 тонна таран тырă сутаççĕ.

Халăхран пухнă ял хуçалăх продукцийĕ райпон общество апатланăвĕн предприятийĕсем валли кăна мар, хула халăхне сутма та çитет. Кашни шăмат кун çĕр улми, пахча çимĕç тиенĕ машинăсем Шупашкар е Çĕнĕ Шупашкар еннелле çул тытаççĕ, суту-илÿ йĕркелеççĕ. Йăлана кĕнĕ "Кĕр парни" ярмăрккăна хутшăнса Вăрмарсем ырă сăмаха тивĕçнĕ. Хула çыннисем хĕл каçмалăх паха продукци туянма май пурришĕн питĕ кăмăллă.

Çула тухма, тавар турттарма райпон пуян автопарк, общепитпа çăкăр завочĕн хăйсен автопаркĕсем пур пулин те çĕнĕ машинăсем туянма тăрăшаççĕ. Кăçал меллĕ "Газель" илнĕ. Çĕнĕ технологисене çул парса тата икĕ лавккана – Кавалпа Чулкаçрине – автоматизациленĕ. Халĕ çак меслетпе райпон ултă лавкки ĕçлет. Çитес çул общество апатланăвĕнче те тытăнса пăхма, "Юность" кафене автоматизацилеме палăртнă.

– Райпора 265 çын ĕçлет, хăйĕн тивĕçне кашниех яваплă пурнăçлама тăрăшать, – тет Сергей Николаевич. – Çак йыша чакарма шухăшламастпăр. Май килсен çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелеме те хатĕр. Чи кирли – пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлени. Килĕшÿлĕх пулсан кирек мĕнле йывăрлăха та çĕнтерме, ĕмĕтсене пурнăça кĕртме пулать.

**Алина ЛУКИЯНОВА.**
Автор сăн ÿкерчĕкĕсем

Реклама.





● Вăрмар кооператорĕсем Çĕнĕ Шупашкарти "Кĕр парни" ярмăрккăра.

# Тал пиçенлĕ хир,

## е Талхир хăй вăхăтĕнче малашлăхсăррисен йышне кĕнĕ



• Те ял ку, те...



• Пурăнман çуртсене вĕтлĕх пуснă.

Аякран пăхсан вăл вăрман пекех курăнать. Çавăнпа эпĕ, пĕчĕк ял шыраканскер, унран пĕр шухăшсăрах иртсе кайрăм. «Талхир ку!» – тесе тĕллесе ярсан тин ращана кĕме хăюлăх çитертĕм. Сукмакпа утсан-утсан тинех пысăках мар пӳрт патне пырса тухрăм. Унтан каллех Америка вĕрени ашкăракан вĕтлĕхе кĕтĕм. Кунта «пытаннă» çуртсене асăрхаман та. Кусенче мăрьеren тахçанах тĕтĕм тухманни куç кĕрет. Уçланкă манерлĕ тепĕр вырăнта пĕчĕкçĕ тăп-тăп пӳрт пур. «Кунта пурăнаççех пулĕ»,– пĕтĕмлетрĕм эпĕ радиона питĕ хытă янине илтсе. Анчах пĕрин хапхине тĕртсе пăхрăм, тепринне – уçакан пулмарĕ. Чăтлăхран тухса хирелле тинкертĕм – ак хайхи пĕр кинемейпе мучи вĕтĕ çĕр улми пухса çӳреççĕ. Паллашрăмăр. 79-ти Ирина Федоровăпа 85-ри Иван Скороходов хавас пулчĕç мана. «Çапла çав, пирĕн ялăн халĕ пуçĕ те, вĕçĕ те çук», – терĕ Ирина Яковлевна Талхире чылай вăхăт ширани пирки пĕлтерсен.

«Ялĕпе те ултă пӳрт кăна юлчĕ ĕнтĕ. Вĕсенчен 4-шĕ – пушă. Эпир мăшăрпа Геннадий Федоровичпа тата Иван Прокопьевич çуллахи вăхăтра яла килсе пурăнатпăр. Икĕ çул ĕнтĕ кĕçĕн ывăл патĕнче Çăкаллă Явăшра хĕл каçатпăр. Иван Скороходов вара хĕл кунĕсене Шупашкарта ачисем патĕнче ирттерет. Хăй вăхăтĕнче вара Талхирте 18 килччĕ. Питĕ капăр ял пулнă вăл. Тавралла карта тытса çавăрнăччĕ, укăлча, хапха пурччĕ. Чăх, пăру, лаша фермисем пулнă. Ял пуçĕнче колхоз пӳрчĕ вырăн тупнăччĕ. Унтах каçсерен çамрăксем пухăнатчĕç. Кино кăтартатчĕç. Колхозĕ «Пионер» ятлăччĕ. Председательте Степан Владимиров ĕçлетчĕ. Маларах вăл Красноармейски район хаçатĕнче редакторта та вăй хунăччĕ пулас. Пирĕн колхоз тыр-пул туса илессипе питĕ палăрнă хăй вăхăтĕнче. Кунта çĕр /хăйăрлăрах хура çĕр/ чаплă, пахча çимĕçпе тыр-пул питĕ ăнса пулать», – каласа парать Ирина Яковлевна. Çав вăхăтрах Талхирте Филипп Иванов ятлă ăста пулнă, вăл катка-пичке туса сутнă. Таврари ялсенче те пĕлнĕ ăна. Ялйыша вăл каткисене тӳлевсĕрех туса панă.

«Председатель ял çумĕнче сад ĕрчетме ĕмĕтленетчĕ. Талхирте çамрăксене речĕпех хурăн ларттарчĕ. Хăйĕн çурчĕ умĕнче те ав виçĕ хурăн ӳсет», – калаçăва хутшăнчĕ 50 çул ытла выльăх тухтăрĕнче ĕçленĕ Геннадий Федорович. Хурăнсем аванах çитĕннĕ, тĕрекленнĕ. Паян ватăсем вĕсен хушшине вырнаçтарнă сак çине тухса лараççĕ те иртнине çĕнĕрен куç умне кăлараççĕ...

Федоровсем пĕлтернĕ тăрăх – Талхире 1929 çулта Уйкас Кипекрен куçса килнĕ 18 çемье пуçарнă. Ял çумĕпе Услантăр шывĕ авкаланса юхать. «Çывăхрах Ракаш /ахăртнех акăш сăмахран пулнă. Ватă çынсем унта акăш йышлă пурăннине калатчĕç/ кӳлли пурччĕ. Тарăнччĕ вăл, шывĕ тăрăччĕ. Ун çывăхĕнчи çаранта утă çулаттăмăр. Каярах темшĕн-çке типрĕ вăл. Ялне ку вырăнта тал пиçен йышлă пулнăран Талхир /тал пиçенлĕ хир/ тенĕ. Талхирсем Вăрнар районĕнчи ялсенчен чăн малтан ГЭС электроэнергийĕпе усă курма тытăннă. ГЭСне Красноармейски районĕнчи Тусайсем тытса тăнă. Çавал шывĕ çинчеччĕ вăл»,– аса илӳ çăмхине малалла сӳтет Ирина Яковлевна. «1932 çулта йĕркеленнĕ «Пионер» колхоза 18 кил, 75 çын кĕнĕ. 105 гектар çĕр пулнă», – вулатăп Вăрнар район энциклопедине.

Ирина Яковлевна Красноармейски районĕнчи Кĕрекаç ялĕнче çуралса ӳснĕ. Геннадий Федоровича вăл 1961 çулта качча тухнă. Талхирти чăх, сурăх фермисенче вăй хунă, лаша та пăхнă. Фермăра ĕçлесех тивĕçлĕ канăва тухнă, «Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ. Мăшăрĕпе виçĕ ывăлпа пĕр хĕр пăхса ӳстернĕ. «Ялти çынсем 1967 çулта Томск хулине питĕ йышлăн куçса кайрĕç. «Пĕчĕк ялсене пĕтермелле, вĕсен малашлăхĕ çук», – тетчĕç ун чухне. Пире те çĕр парасшăн, çурт та ларттарасшăн марччĕ. Председательпе туслăрах пулнăран кăна 1967 çулта çурт çĕклеме май килчĕ. Çакнашкал политика пулман тăк ку ялтан никам та куçса каймастчĕ, мĕншĕн тесен анкартисем аван кунта. Хăш-пĕри Уйкас Явăшпа Çăкаллă Явăша кайрĕ. Çапла ял майĕпен пушанса юлчĕ, ватăсем вилкелерĕç. Ял кĕтĕвĕ те 1967 çултанпах çук. Ача сасси те тахçанах илтĕнмест кунта. Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-80-мĕш çулĕсенче вара кашни килте 4-5-шер ачаччĕ», – ассăн сывларĕ Ирина Яковлевна. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-70-мĕш çулĕсенче «малашлăхсăр» ялсен политикине пула Раççейре 138 пин пĕчĕк ял пĕтнĕ, миллион гектара яхăн çĕре пусă çаврăнăшĕнчен кăларнă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче совет ученăйĕсем /Т.Заславкая тата ытти те/ хура мар тăпраллă тăрăхра кăна 149 пин ялтан 29 пинне кăна «чĕррисен» йышĕнче хăварма палăртнă. Ыттисене вара «малашлăхсăр» тесе пĕтерме тĕв тунă... Талхир шăпах çавăн пек шăпаллисен йышне кĕнĕ. Вăрнар тăрăхĕнче пуринчен маларах Ильич лампочкипе усă курма тытăннă Талхир пĕтессе кам шухăшланă? Цивилизаци ырлăхĕ те – çут çанталăк газĕпе асфальт çул – çук кунта паян.

> ИРТНĔ ĔМĔРĔН 70-МĔШ ÇУЛĔСЕНЧЕ СОВЕТ УЧЕНĂЙĔСЕМ ХУРА МАР ТĂПРАЛЛĂ ТĂРĂХРА 149 ПИН ЯЛТАН 29 ПИННЕ КĂНА «ЧĔРРИСЕН» ЙЫШĔНЧЕ ХĂВАРМА ПАЛĂРТНĂ. ЫТТИСЕНЕ ВАРА «МАЛАШЛĂХСĂР» ТЕСЕ ПĔТЕРМЕ ТĔВ ТУНĂ... ВĂРНАР ТĂРĂХĔНЧЕ ПУРИНЧЕН МАЛАРАХ ИЛЬИЧ ЛАМПОЧКИПЕ УСĂ КУРМА ТЫТĂННĂ ТАЛХИР ПĔТЕССЕ КАМ ШУХĂШЛАНĂ? ЦИВИЛИЗАЦИ ЫРЛĂХĔ ТЕ – ÇУТ ÇАНТАЛĂК ГАЗĔПЕ АСФАЛЬТ ÇУЛ – ÇУК КУНТА ПАЯН

Федоровсен шухăшĕпе председатель ялтан Çĕпĕре кайман пулсан, тен, лару-тăру урăхларах пулатчĕ... Кӳршĕри Кĕрекаç колхозĕн ертӳçипе килĕштерейменмĕн вăл. «Ял пĕтни питĕ кулянтарать. Çавăн пек саккун пулман тăк çав маттур çынсем пĕри те тухса каймастчĕç. Çуралнă тăрăх асран тухмасть пулас, çуллахи вăхăтра килеççĕ те: «Ах, хамăр ял пĕтрĕ!» – тесе макăрса каяççĕ. Манăн та чунăм килеллех туртать. Çуллахи вăхăтра ачасем патĕнче пĕрре те ларас килмест, пуш уйăхĕнчех Талхире васкатпăр. Ĕçсене пуçтарсан юпа уйăхĕнче вара ирĕксĕр тенĕ пек Çăкаллă Явăша каятпăр. Хĕл каçипех вара тăван ял тĕлĕкре курăнать. Пĕчĕк тăван çĕр-шывран хаклăрах вырăн çуках çав çыншăн. Ачасем хуларан килсен: «Мĕнле усă сывлăш!» – теççĕ. Хамăр пахчара ӳстернĕ çимĕçрен тутлине те тупаймăн. Ывăлăмсемпе кинĕмсем хавхаланса мунча кĕреççĕ, çапăнаççĕ те çерем çине тухса выртаççĕ... Ял çĕнĕрен вăй илейĕ-ши? Темле çав... Çĕр лайăх тесе хăшĕсем анкартисене пăрахман-ха. Çурт вырăнне туянас текенсем те килкелеççĕ. Ывăлăм Иван та пенсие тухсан килсе пурăнмасть-ши тетĕп», – шанăçне çухатмасть Ирина аппа. Çуллахи вăхăтра Федоровсем ачисене валли чăх-чĕп, хур-кăвакал йышлă усраççĕ, пахча çимĕç, улма-çырла ӳстереççĕ. Ирина Яковлевна хăмла та ӳстерет. Ĕлĕкхилле хуранпа сăра вĕретет. Кашни канмалли кун ачисем килнĕ тĕле кукăль пĕçерет, мунча хутса пултарать. Ирĕклĕрех чухне «Чăваш хĕрарăмĕ», «Килçурт, хушма хуçалăх», «Ял пурнăçĕ» хаçатсене алла тытать. Почтальонка Талхире пĕр вĕсемшĕн кăна килет-мĕн. «Манран маларах пĕр ача та ан вилтĕр, пурте сывă пулччăр, мăнуксем савăнтарччăр – акă манăн ĕмĕт»,– чунне уçрĕ ватă. Ачисем вара вĕсене: «Эсир нумайрах пурăнăр. Эсир пулсан ял та «кăштах сывлать», – теççĕ имĕш. Мĕнех, Федоровсемпе Скороходов вăрăм ĕмĕрлĕ пулччăр!



• Ирина Федорова.

■ **Роза ВЛАСОВА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем

# ЫЙТУ — ХУРАВ

## Кунта олимпиецсем çитĕнеççĕ

**Çĕнĕ Шупашкарта Олимп резервĕн училищи ăнăçлă ĕçленине пирĕн тăрăхра кăна мар, республика тулашĕнче те лайăх пĕлеççĕ. Ăна хăçан уçнă тата унта ăсталăхне туптанисен малашнехи кун-çулĕ çинчен каласа кăтартаймăр-ши?**

**А.СИМОНОВА.**
Çĕмĕрле районĕ.



Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕн вăтам пĕлӳ паракан ятарлă училищине 1991 çулта пысăк квалификациллĕ спортсменсемпе тренерсене хатĕрлеме уçнă. Кунта пĕлӳ илме пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулăн 9 класĕнчен вĕренсе тухнисене, спорт разрячĕ панисене илеççĕ, 2 е 3 çул вĕренмелле. Çакăнта ăсталăхне ӳстерекенсем малашне тренер-преподаватель пулса ĕçлеме пултараççĕ.

Училище ĕçленĕ хушăра 200 ытла çамрăк професси спорт çулĕ çине тухнă. Вĕсен хушшинче 40 ытла çын Раççейĕн суйласа пухнă командисен членĕсем пулнă е хальхи вăхăтра вĕсен йышĕнче. В.М.Егорова, Е.Н.Николаева, В.А.Андреев, О.В.Иванова, Е.Н.Грузинова, Л.Н.Петрова, О.В.Смирнова Олимп вăййисене хутшăннă, тĕнче, Европа тата Раççей чемпионĕсемпе призерĕсем. Тĕслĕхрен, 2006-2007 çулсенче кунта 156 вĕренекен пулнă, çав йышра Раççей спорт тава тивĕçлĕ мастерĕсем – 3-ĕн, Раççей спорт тĕнче класлă мастерĕсем – 14-ăн, Раççей спорт мастерĕсем – 14-ăн, спорт мастерĕн кандидачĕсем – 45-ĕн. Вĕренекенсем спортăн 15 енĕпе ăсталăхне туптаççĕ, çав шутра çăмăл атлетикăпа, хоккей, бокс, футбол енĕпе, велосипедпа ярăнассипе, ирĕклĕ майпа кĕрешессипе, йывăр атлетикăпа, сĕтел çи теннисĕпе тата ыт.те.

## Ярмăрккана чăвашсем те çӳренĕ

**Макарьево ярмăркки çинчен тĕплĕнрех пĕлес килет. Чăваш тăрăхĕнчен пынисем те хăй вăхăтĕнче унта сутă тунă.**

**С.ГЛАДКОВ.**
Вăрнар районĕ.

Чул хула облаçĕнчи Лысково районĕнчи Макарьево мăнастирĕ патне /халĕ – Макарьево поселокĕ/, Атăлăн сулахай çыранне, тĕрлĕ тăрăхран кашни çулах ярмăрккана пухăннă. Вăл утă уйăхĕн 25-мĕшĕнче уçăлнă. Вырăс купсисене тутарсем çаратнă май III Василий Хусан çывăхĕнчи Арск ярмăрккине кайма чарнă, Васильсурскра 1524 çулта çĕнĕ ярмăркка йĕркеленĕ. Каярах ăна Макарьево мăнастирĕ çывăхне куçарнă. XVI ĕмĕр варринчен вăл утă-çурла уйăхĕсенче иртнĕ. XVII ĕмĕртен ку ярмăркка Пĕтĕм Раççей тата тĕнче пĕлтерĕшлĕ суту-илӳ лапамĕ пулса тăнă. Кунта Раççейĕн вăта çĕр районĕсенчен, Атăл тăрăхĕнчен /уйрăмах Чăваш çĕр-шывĕнчен/, Çĕпĕртен халăх йышлăн çӳренĕ. Вăтам Азири, Кавказ леш енчи, Индири, Иранри купсасем питĕ нумай тавар кӳрсе килнĕ, тĕпрен илсен пурçăн тата пир-авăр пусма-тавар. 1830 çул тĕлне Макарьево ярмăрккин тавар çаврăнăшĕ 30,4 млн кĕмĕл тенке çитнĕ. XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче унта  хыснан тата уйрăм çыннăн 3200 склад пӳлĕмĕсем шутланнă.

Ытларах чухне чăвашсем ярмăрккана ял хуçалăх продукцийĕ илсе кайнă. XVII-XVIII ĕмĕрсенче Чăваш тăрăхĕ тырăпа, мамăк тирпе, курăспа, хăмлапа, пылпа, ăвăспа, аш-какайпа, пулăпа, салăпа, çупа, йывăçпа, эрехпе, кантăкпа, хутпа тивĕçтернĕ. Пирĕн тăрăха тимĕр, металл япаласем, пусма-тавар, сăрăсем, эрешсем кӳрсе килнĕ. 1816 çулхи пушар ярмăрккан тĕп хуралтисене кĕле çаварнă. 1817 çулта Чул хула ярмăрккине йĕркеленĕ.

## Çĕнтерӳ çинчен пĕлтерме васкană

**Марафон чупăвĕ тĕнчере мĕнле пуçланса кайнă-ши?**

**Н.ПАДИАРОВА.**
Шупашкар хули.



Марафон чупăвĕ – 42 километр та 195 метра чупни. Тĕнчере пуçласа çакăн чухлĕ çухрăма грексен салтакĕ 2300 çул каялла чупса тухнă. Вăл Афинăран 40 километртра вырнаçнă Марафон ялĕнче перссемпе çапăçса Греци çарĕсем çĕнтерни çинчен пĕлтерме васканă. Марафон чупăвĕ енĕпе тĕнчери пирвайхи ăмăртусене 1896 çулта пĕрремĕш Олимп вăййисенче ирттернĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче Кӳкеç – Шупашкар, каярах Апаш – Шупашкар /вăрăмăшĕ 20 километр/ маршрутсемпе чупусем ирттерме пуçланă. 1961 çулта А.Г.Улангин спортсменсенчен чи малтан марафон чупăвĕ енĕпе СССР чемпионачĕн бронза призерĕ пулса тăнă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенчен пуçласа вăрăм дистанцисене республикăри спортсменсем те чупма пуçланă. 1992 çулта В.М.Егорова марафон чупăвĕ енĕпе çуллахи 25-мĕш Олимп вăййисенче çĕнтернĕ, тепĕр 4 çултан 26-мĕш вăйăсенче кĕмĕл медале тивĕçнĕ. Тĕнче чемпионачĕн бронза призерĕ С.В.Захарова Бостонри /2003/ тата Чикаго хулинчи /2003/ марафонсенче çĕнтернĕ, Лондонра /2001, 2002/ «кĕмĕл» илме тивĕçлĕ пулнă тата нумай марафона хутшăнса мала тухнă. Л.Н.Петрова тата А.П.Иванова çуллахи 28-мĕш Олимп вăййисене /2004/ хутшăннă.

Чăваш Енре инçе дистанцисене чупакансене хатĕрлес енĕпе А.Г.Улангин, В.С.Семенов, М.П.Кузнецов, Ю.М.Егоров, Н.А.Захаров, В.Н.Григорьев нумай тăрăшнă.

## Çĕлене те... çиеççĕ

**Çĕлен ашĕнчен те апат хатĕрлеççĕ тенине вуласа пĕлтĕмĕр. Тĕрĕсех-ши ку е юптараççĕ çеç? Тĕнчери чи пысăк çĕлен çинчен çырса кăтартаймăр-ши?**

**А.ВЕСЕЛОВА, Н.КСЕНОФОНТОВА.**
Вăрмар районĕ.



Китайăн кăнтăр районĕсенче çĕлен ашĕ чи тутлă апатсен шутне кĕрет. Çакă уйрăмах кăсăклă: çĕлен мĕн чухлĕ наркăмăшлăрах, унран хатĕрленĕ апат çавăн чухлĕ тутлăрах пулать. Тĕслĕхрен, авалхи Китайсен экзотика апачĕ паян та уяв сĕтелĕ çинче паллă вырăнта. «Çĕленпе тигр çапăçăвĕ» ятлă апата çĕленпе кушак какайĕнчен хатĕрлеççĕ.

Тĕнчери чи пысăк çĕлен – тинĕс çĕленĕ. Ăна Бразилире Абун форчĕ çывăхĕнче тытнă. Унăн тăршшĕ 35 метра яхăн пулнă.

## Тухтăр, профессор

**Пирĕн Куславкка тăрăхĕнчен культурăпа искусствăра, медицинăра, спортра пысăк çитĕнӳ тунисем сахал мар тухнă. Вĕсенчен пĕри – Юрий Георгиевич Максимов. Кам вăл, мĕнпе палăрнă халăх хушшинче?**

**А.ВАСИЛЬЕВА.**
Куславкка хули.



Ю.Максимов Куславкка районĕнчи Тулпай ялĕнче 1949 çулта çуралнă. Тухтăр, патшалăх деятелĕ, медицина ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор. Хусан патшалăх медицина институтĕнчен вĕренсе тухнă. Шупашкар районĕнчи тĕп больницăра врач-отоларинголог, тĕп врач пулса ĕçленĕ. Чăваш АССР сывлăх сыхлавĕн министрĕн çумĕ /1983-1992/, Чăваш Республикин Министрсен Канашĕ çумĕнчи Лицензи-аккредитаци комиссийĕн председателĕ пулнă. Чăваш патшалăх университетĕнче профилактика медицинин кафедринче ĕçленĕ, профессор. 2007 çултанпа Юрий Георгиевич – Амур облаçĕн сывлăх сыхлавĕн министрĕн пĕрремĕш çумĕ, 2008 çултанпа – министрĕ.

Халăх сывлăхĕ еплерех пулнине, тĕрлĕ фактор ăна мĕнле витĕм кӳнине тĕпчет. 100 ытла ăслăлăх ĕçĕ çырнă.

Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕ.

## ХЭМЗА тата ыттисем

**Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Чăваш тăрăхĕнчи промышленноç предприятийĕсем еплерех пулăшу кӳнĕ?**

**Н.ЯСТРЕБОВА.**
Элĕк районĕ.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланиччен пирĕн тĕп хуламăр Шупашкар промышленноç тĕлĕшĕнчен аталансах кайман. 1939 çулта кăна вăл Канаш хулипе чукун çулпа çыхăннă. 1941 çулхи кĕркунне резинăран техника изделийĕсем кăларакан предприятин /халĕ В.Чапаев ячĕпе хисепленет/ пĕрремĕш цехĕсем ĕçлесе кайнă.

Индустри сăн-сăпачĕ Шупашкара 1942 çултан кĕме пуçланă. Фашистсем пирĕн çине тапăнсан фронт çывăхĕнчен тыла 1360 ытла предприятие куçарнă. Çав шутран 28 заводпа фабрикăна, цеха Чăваш АССРне янă.

Эвакуаци йĕркипе куçарнă чи пысăк предприяти – электроаппаратура завочĕ. Унăн малтанхи ячĕ – «ХЭМЗА» – Харьковри электричествăпа механика завочĕ. Оборудование тиенĕ пĕрремĕш эшелон пирĕн пата 1941 çулхи юпа уйăхĕн 14-мĕшĕнче çитнĕ. Пĕрлех 500 ытла рабочи, инженерсемпе техниксем килнĕ. Предприятие ун чухнехи Шупашкар хĕррине – кооператци техникумĕпе педагогика институчĕн вĕренӳ корпусĕсемпе общежитийĕсене вырнаçтарнă. Института Сĕнтĕрвăррине куçарнă.

1942 çулхи нарăсра электроаппаратура завочĕ çар валли планра кăтартнă чухлĕ продукци пама тытăннă. 1944 çулта Шупашкарти электроаппаратура заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

Республикăна куçарса килнĕ ытти предприятие те манман. Вĕсен валли те Шупашкартах вырăн тупнă. 1942 çул пуçламăшĕнче хăю тĕртекен, чăлха çыхакан, çип арласа пир тĕртекен фабрикăсем хута кайнă. Çип арласа пир тĕртекен ытти фабрикăна /пысăк пулман вĕсем/ Канашра, Çĕрпӳре, Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕрте вырнаçтарнă. Çĕнĕлле йĕркелесе янă предприятисем татах та пулнă: атă-пушмак фабрики, Хĕрлĕ Çар валли йĕлтĕрсем, урапа-çуна, ытти хатĕр тăвакан пĕчĕк предприятисем.

Калама çук йывăр пулнă, укçа çитмен пулсан та вăрçă вăхăтĕнче республика промышленноçĕ аталансах пынă. Тĕслĕхрен, Атăл леш енче, торф кăларакан предприятире, хула валли электростанци туса лартнă. 1944 çулхи нарăс вĕçĕнче Атăл леш енчи электростанци хулана ток парса тăма пуçланă.

Чи малтанах çынсен хастарлăхĕпе, ырми-канми ĕçĕпе çĕкленнĕ, аталаннă промышленноç предприятийĕсем республикăра паян йăшса пыни, хăшĕсем çухални, паллах, хамăр тăрăхра пурăнакан кашни çыннăн чунне ыраттарать.

## Çерçи те тĕрлĕ пулать

**Эпир хамăр тăрăхра нихăçан та кăнтăр енне вĕçсе кайман, çулталăк тăршшĕпех кунта пурăнакан çерçисене курма хăнăхнă. Пĕлесчĕ: шыв çерçийĕсем те пулаççĕ-им?**

**Н.РОМАНОВ.**
Çĕнĕ Шупашкар хули.

Шыв çерçийĕ çырмари шыв куçĕсем çинче хĕл каçать. Аптрамасть тата: шыва кĕрет, пăр çинче ярăнать. Юрă та юрлать-ха апăрша.

Пăрлă шыва чăмать, юшкăн çинче утса çӳрет. Сăмсине чул айне чикет – апат шырать. Тупнă-тупманах çӳлелле васкать, ишсе тухать те пăр çине вĕçсе ларать, тĕрлĕ нăрра таккаса çиет.

Хĕлле яра кунах ишет, чăмать, шыв тĕпĕнче чупать. Йĕпенмест, шăнмасть пĕрре те. Мĕншĕн тесен тĕкĕ шыва пачах та сăрхăнтармасть, питĕ çăра тата. Пăр çинче канса выртнă май çăварĕнчен хĕвел çаврăнăш хуппи сурса кăларнă пек тĕрлĕ нăрă çунаттисене, шăммисене сура-сура кăларать.

**Кăларăма Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.**

# Чăваш халăхĕн тĕп хаçатĕнче – "Хыпарта" – сире мĕн килĕшмест, мĕн çитмест, мĕн сĕнетĕр?

## Чĕрĕлĕх варкăшĕ кĕртмелле

1906 çулта тухма пуçланă «Хыпар» – наци символĕ. Республикăри урăх нимĕнле кăларăм та чăваш халăхĕн тĕп хаçачĕ пулма пултараймасть. Хаçатра кам ĕçленине пăхмасăр «Хыпара» яланах юратса вуланă, вулăп та. Хăйне евĕрлĕ пулнипе те килĕшет вăл мана.

Кашни кун тухакан хаçатра информаци ытларах кирлĕ. Пысăк калăпăшлă материалсем пичетленни вырăнлах мар пек туйăнать. «Тырă акнă, тырă вырнă» йышши статьясем те илĕртмеççĕ. Хаçатра пысăк проблемăсене хускатмалла. Ял шăпипе, кун-çулĕпе çыхăннă ыйтусене çĕклемелле. Хăть мĕнле пулсан та чăваш халăхĕн пуласлăхĕ ялпа çыхăннă.

Чĕрĕ, çивĕч материалсем ытларах кун çути курсан – хаçата вулакан та йышланĕ.

■ **Виталий РОДИОНОВ,**
**И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ литература кафедрин пуçлăхĕ**

## Кăсăклă хыпарсем кашни районтанах пулччăр

– «Хыпарăн» хăйĕн чĕлхи, вулаканĕ. Хаçата куллен вулатăп, йăнăш сахал куратăп. Ытларах чухне пĕр авторсем çыраççĕ. Материалсене кам редакцилени, камăн алли витĕр тухни тÿрех курăнать.

В.Смирнова «Хÿтлĕх» кăларăма хăйне евĕр туса пырать. «Епле ĕлкĕрет-ши?» – тесе шухăшлатăп тепĕр чухне. Н.Смирновăпа Н.Коновалов иккĕшех пĕр хаçат тултарма хатĕр пек туйăнать. Икĕ çул телевизор пăхмастăп. Криминал йăлăхтарчĕ. Çапах та Коновалов тусăм мĕн çырать-ши тесе хаçата уçса пăхатăп.

Культура пайĕнче ĕçлекенсене çăмăл мар. Вĕсем малалла йывăрлăхсене çĕнтерсе утаççĕ. Кăçал Культура çулталăкĕ пулнипе – пушшех те. Çак рубрикăпа пичетленекен кĕске хыпарсене кăмăлласа вулатăп.

«Хыпарти» спорт темипе çырнă метериалсене пăхса пыратăп та спортра кире пуканĕ çеç пек туйăнать. Ыттисем пирки те çырмалла. Пĕтĕмпех пĕр шайра пулса пытăр.

Пĕр районтан темиçе хыпар тухса каять тата. Çакă килĕшÿллех мар пек туйăнать.

Театр çинчен çырнă рецензисене, уйрăм артистсем пирки çырнă материалсене курас килет. А.Юрату çак рубрикăна «Çамрăксен хаçатĕнче» тытса пырать-ха. «Хыпарта» та курас килет çавăн евĕрлисене. Кино пирки çур çулта пĕрре рецензи çырсан аванччĕ. Çынсем кинона та çÿреме пăрахрĕç вĕт.

■ **Герман ЖЕЛТУХИН,**
**хаçат тусĕ**

## Шурри çумĕнче хури те пур

«Хыпар» хаçата тахçантанпах çырăнса илетĕп, юратсах вулатăп. Унта кăсăклă та чуна тыткăнлакан, шухăшлаттаракан статья сахал мар. Хаçат страницисенче спорт темине çутатни манăн, «Спорт – пирĕн тус», «Вăйлисемпе хăюллисен шкулĕ», «Вăрмарсем – Олимп çулĕпе» тата ытти кĕнеке авторĕшĕн, хальхи вăхăтра, уйрăмах Пĕтĕм тĕнчери «Раçсей – спорт çĕр-шывĕ» форум çывхарнă май, питĕ пĕлтерĕшлĕ. Чăваш спортсменĕсен çитĕнĕвĕсемпе паллаштарни çамрăксемпе ачасене сывă пурнăç йĕркине пăхăнма, спортпа туслă пулма вĕрентет. Анчах начаррипе япăххи пирки те манмалла мар, мĕншĕн тесен çитменлĕхсем кашни отрасльте пур.

«Вырăнти хăй тытăмлăх» кăларăма та палăртас килет. Унта старостăсен, район тата ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, ялти пултарулла çынсен пурнăçĕ аван курăнать. Çав вăхăтрах хресчене пăшăрхантаракан ыйтусене тата та анлăрах çутатни пăсмĕччĕ. Калăпăр, ют çĕр-шывран апатçимĕç илсе килме чарнăранпа хресчен шухăш-кăмăлĕ еплерех улшăннă?

Хаçатра критикăллă материалсем çитменни курăнать. Чылай статьяра ыррине лайăххи кăна. Ку аван-ха. Çапах шурри çумĕнче хури те пурах ĕнтĕ.

■ **Анатолий ХОВАНСКИЙ,**
**ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ**

## Сăн-пичĕ çеç мар, статьясен пахалăхĕ улшăнни те туйăнать

– Эпĕ "Хыпара" киоскран илетĕп. Пĕр номерне те сиктермесĕр тăван халăхăн пурнăçне, ĕçнехĕлне туллин çутатса тăракан хаçатра кун çути куракан статьясен, пĕтĕмĕшле илсен, çырлахтараççĕ мана. Журналистсем халĕччен мĕн тунипе килĕшсе ларманни, çĕнĕ шыравсене тухни вулакансене кăсăк материалсем сĕнме тăрăшни лайăх палăрать. Коллектив пĕр шухăш-тĕллевлĕ, пĕр-пĕрне çур çăмахранах ăнланни аван сисĕнет. Юлашки вăхăтра "Хыпарăн" сăнпичĕ кăна мар, унта вырăн тупакан статьясен содержанийĕ те палăрмаллах улшăнма тытăннине хаçата куллен-кун вуласа тăракансем çийĕнчех асăрхаса илчĕç. Редакци коллективĕ вулакансен кăмăлне çавăрма çĕнĕ майсем шырани куç умĕнчех.

Мĕн пăшăрхантарать-ха мана? Общество корреспонденчĕсен хушшинче "чун инженерĕсем" – çыравçăсем – ытла та сахал. Республикăра пултарулăх союзĕсем темиçе, анчах темшĕн-çке вĕсен членĕсем – халăха хăйсен хайлавĕсемпе савăнтарса тăма тивĕç поэтсемпе писательсем – наци хаçачĕпе çыхăну тытмаççĕ. Манăн вĕсене вулакансене хумхантаракан ыйтусемпе публицистика сулăмĕллĕ статьясем çыртарас килет. Хальлĕхе вара чылайăшĕшĕн "Хыпар" çук та тейĕн.

■ **Серафим ЕФИМОВ,**
**Раççей Журналистсен союзĕн членĕ, Йĕпреç поселокĕн хисеплĕ çынни**

## Сире пĕлме: «Хыпарти» ятарлă кăларăмсем

**Редакцирен:**

**Эпир, журналистсем, "Хыпар" хаçата вулакансем валли кăларатпăр. Вăл мĕнле пахалăхлă пуласси вара, тăванăмăрсем, сирĕнтен те нумай килет. Çакна тĕпе хурса ĕнтĕ çĕнĕ ярăм уçрăмăр.**

